Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮЛЬ 11 ТУНТИКУН
158 (4971) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—28
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 6—23

Чăваш чĕлхин ÿсĕмĕ

Пирĕн хаçатăн ĕнерхи номĕрĕнче Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Чăваш орфографинчи улшăнусем çинчен" йышăннă постановлени пичетленсе тухрĕ.

„Чăваш правописанин 1933 çулта йышăннă правилисенче вырăс чĕлхинчен тата ун урлă урăх чĕлхесенчен кĕнĕ интернационаллă сăмахсене тата ытти тĕрлĕ сăмах пулăвĕсен формисене çырас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пулнă. 1933 çулта вырăс алфавитĕнчен уйрăм саспаллисене кĕртни орфографи ыйтăвне татса памарĕ, мĕншĕн тесен пĕр сăмахах икĕ тĕрлĕ графикăпа çырасси çаплипех йулчĕ (Вологда — Вологдă, Горький—Горйкий, пятилетка—пйатилеткă).

Чăваш чĕлхинче вырăс тата интернационаллă сăмахсене пăсса çырнипе буржуаллă националиссем чăваш чĕлхине, апла пулсан чăваш культурине те, вырăс халăхĕн малта пыракан социализмлă культуринчен уйăрас тĕлĕшпе усă курнă", тесе каланă Чăваш АССР правительствин постановленинче.

Çак постановлени пичетленсе тухнă кунран пуçласа, чăваш чĕлхинче вырăс тата интернационаллă сăмахсене çырма чăваш алфавитне вырăс алфавитĕнчен çĕнерен ъ, щ, ь, э, ю, я саспаллисем кĕреççĕ.

Чăваш АССР правительствин постановленийĕ чăваш чĕлхи, чăваш халăхĕн социализмлă культури хăйĕн ÿсĕм çулĕ çинче тата тепĕр пысăк утăм туни çирĕплетсе парать.

Ленин—Сталин аслă партийĕ йертсе пынипе, малта пыракан революцилĕ вырăс пролетариачĕ пулăшнипе чăваш халăхĕ социализмла Аслă Октябрь революцинче, ытти нацисемпе пĕрлех, ĕмĕрхи пусмăрлăхран, хĕнхуртан туха, социализм строительствине хĕрÿлĕн хутшăнчĕ. Хĕвеллĕ совет саманинче çеç чăваш халăхĕн чăнчăн пултарулăхĕ, таланчĕ, паттăрлăхĕ палăрчĕ, ÿссе чечекленчĕ чăваш çĕршывĕ, уçăлчĕ халăхăн куçĕ, уçăлчĕ чĕлхи, культура вăйлă утăмсемпе малала кайрĕ.

Чăваш ĕççыннисем халĕ ĕнтĕ етемлĕх культурин чи çÿлĕ тÿпи пулса тăракан марксизм-ленинизм классикĕсене: Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин кĕнекисене, илемлĕ литературăн тĕнчери классикĕсене хăйсен тăван чĕлхипе куçарса вулама пултараççĕ. Октябрь революцийĕ хыççăн çеç чăвашсем хăйсен чĕлхипе ирĕклĕн, хăйулăн калаçма, çырма, шкулта вĕренме, тăван йурăсене хăйулăн йанратса йурлама телей тупрĕç.

Ĕлĕкхи саманара помещиксемпе капиталиссен стройĕ „вак халăхсене", „инородецсене" пур йенчен те таптаса, пĕтерсе пынă. Чăваш халăхĕ хăйĕн культури, хăйĕн чĕлхи, хăйĕн шкулĕ çинчен ĕмĕтленме те пултарайман.

Чăваш çырулăхĕ 19-мĕш ĕмĕрĕн пуçламĕшĕнче çуралнă. Çак вăхăтала малтанхи „чăвашла" кĕнекĕсем тухнă. Анчах вĕсем „тура кĕнекисем", тĕн кĕнекисем пулнă. Патша влаçĕ лартнă хысна çыннисем чăваш халăхне çутта кăларас ĕмĕтпе мар, вĕсене тата ытларах пусмăрлас ĕмĕтпе чăвашла алфавит тунă, çав алфавитпа тĕн сĕрĕмĕ, патша йĕркине хÿтĕлекен шухăшсем саракан кĕнекесем кăларнă. Халăх хăй культурине, хăйĕн чĕлхине, алфавитне хăй аллипе тума ирĕклĕ пулман. Чăваш ĕççынни хăйĕн чĕлхипе калаçма та шăппăн калаçнă, -упа варĕсен тĕпĕнче хурлăхлă йурăсем йурланă.

Атăл тăрăхĕнчи „вак халăхсене вырăслатас", вĕсенчен патша влаçне хирĕçлеме пултарайман тарçăсем тăвас шутпа пĕр Ильминский йатлă профессор „хăйĕн системине" шухăшласа кăларнă. Ильминский вăхăтĕнчех националиссен „çулйертÿçи" монархист И. Я. Яковлев ĕçлеме пуçлать. Вăл чăваш чĕлхипе хăйĕн алфавитне тăратать, унта мĕнле те пулин „Чăваш уйрăмлăхне" палăртма тăрăшать, çав алфавитпа библи куçарттарма тытăнать. Яковлеван алфавичĕ 1923 çулччен пырать.

Паттăрăн ÿсекен социализмлă пурнăç чăваш чĕлхин стройне тепрен улăшăнтарчĕ. Чăваш чĕлхине, культурине нацилĕ ансăрлăхра, чухăнлăхра тытма пăхакан тăшмансем—буржуаллă националиссем истори урапи айне тантанса йулчĕç.

Аслă социализмлă çĕршывра пурăнакан мĕн пур халăхсем, çаплах пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем малта пыракан революцилĕ вырăс культури йĕнеле хăватлăн туртăнаççĕ. Пуйан та илемлĕ, тулли йанăравлă, çивчĕ вырăс чĕлхи хăйĕн вăйĕпе мĕн пур нацисен чĕлхисене ÿсме, малала кайма çĕклентерсе пырать. Марксизм-ленинизм классикĕсене, тĕнчери аслă писателĕсен произведенисене чăвашла куçарни, чăвашсен социализмлă литератури, культури ÿсни чăваш чĕлхине пысăк пуйанлăх, çĕнĕ пăха сăмахсем кÿчĕ. Тепрен çĕнелчĕ чăваш чĕлхин стройĕ, улшăнчĕ чăваш пуплевĕ, чĕлхе килхушшинчи, йалари чĕлхерен политикă, общество, государство, ăслăлăх чĕлхи пулса тăчĕ. Ленин, Сталин, революция, партия, социализм, конституция, коммунизм сăмахсем пĕтĕм тĕнчипе пĕр йанравпа йанăраççĕ. Буржуаллă националиссем вĕсене урăхла, йури пăсса калама пăхнă, анчах халăх апла тума памарĕ, халăх тăшмăнĕсене çапса аркатрĕ. Революципе, социализмпа перле килнĕ сăмахсем чăваш чĕлхинче те хăйсен аслă тивĕçлĕхĕпе тăванлă итлĕнеççĕ.

Чăваш чĕлхинче вырăс тата интернационаллă сăмахсене çырма чăваш алфавитне вырăс алфавитĕнчен çĕнерен ъ, щ, ь, э, ю, я саспаллисене кĕртни шкулсенче вырăс тата чăваш чĕлхисене вĕрентес ĕçе, политикăлă литературăпа илемлĕ литература тата учебниксем кăларас ĕçе, пĕтĕм культура фронтне тата хăйулăрах утăмсемпе малала йама май парать.

Пĕр пысăк ĕç тунă, халĕ ĕнтĕ чăваш орфографи правилисен проектне мĕн пур халăхпа тĕплĕн сÿтсе-йавса йышăнмала. Ку пысăк тата васкаса тумалли ĕç, мĕншĕн тесен, халĕ орфографи правилисем çук пирки учебниксем кăларас ĕç тытăнса тăрать.

Чăваш чĕлхин çĕнĕ орфографипе пĕтĕм чăваш халăхне палаштармала. Çутĕç халăх комиссариачĕпе культуран ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ чăваш чĕлхин ăслăлăх грамматикине тăвас ĕçе халех йĕркелемеле, орфографи словарьне кăларас пирки ĕçлемеле.

Районри, республикăри пичет орфографи пирки Чăваш АССР правительстви йышăннă постановленине, хаклă документ вырăнне хурса, пурнăçа çирĕппĕн кĕртме тытăнмала.

Коммуниссен партийĕ йертсе пынипе, вырăс халăхĕ пулăшнипе чăваш халăхĕ хăйĕн чĕлхине аслă Сталин саманине тивĕçлĕ, хăйулă, пуйан чĕлхе туса хурĕ.

Халăх переписçне хатĕрленни

1939 çулхи йанварь уйăхĕнче Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăха перепис туса ирттереççĕ (çырса тухаççĕ). ССРС Госпланĕ çумĕнчи халăх хуçалăх учотĕн Тĕп управленинче тата унăн вырăнсенчи органĕсенче перепиçе хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Халăх пурăнакан пунктсемпе çуртсен спискисене тĕпрен илсен туса пĕтерне ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра халăх хуçалăхĕн учот управленин вырăнсенчи органĕсем пур çĕртете вăл спискăсене тĕрĕслеççĕ, сиктерсе хăварнисене, çитменлĕхсене палăртаççĕ.

Часах перепис ирттерме кирлĕ массăлă кадрсем (счетчиксем, инструкторсем т. ыт. те) суйлама тытăнаççĕ. Перепис ĕçне иртнĕ перепиçсем вăхăтĕнче чи лайăх ĕçлене работниксене хутшăнтарма, ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхăтĕнче хăйсене аванйенчен палăртнă работниксене хутшăнтарма палăртса хунă.

(ТАСС).

Ийулĕн 25-мĕшĕнче—Украинă ССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийĕ

КИЙĔВ, ийулĕн 9-мĕш. (ТАСС). Украинă СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ Украинă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççине 1938 çулти ийулĕн 25-мĕшĕнче Кийĕв хулинче пухма йышăннă.

Подписывайтесь на Государственный Заем Третьей Пятилетки (выпуск первого года)

УСПЕШНЫМ РАЗМЕЩЕНИЕМ ЗАЙМА ЕЩЕ БОЛЬШЕ УКРЕПИМ НАШУ ЦВЕТУЩУЮ СОЦИАЛИСТИЧЕСКУЮ РОДИНУ!

„Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне çырăнса илĕр"—В. Ливанова художникĕн плакачĕ.

Д. Чернов репродукцийĕ (Сойузфото).

Шупашкар, Улатăр, Канаш хулисемпе танлашмала

Ийулĕн 10-мĕшне республикĕпе илсен çĕнĕ зайома 11.207.000 тенкĕлĕх çырăннă. Çак шутран 21.000 тенкĕ укçа пухнă. Шăнкăртам районĕнчи колхозсенче укçа пухасси пуринчен те лайăх пырать. Кунта пайанхи куна 9 пин тенкĕ ытла укçа пухнă.

Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Зайома çырăнасси уйрăмăнах Шупашкар, Улатăр, Канаш хулисенче лайăх пырать. Шупашкар хули тăрăх илсен çĕнĕ зайома иртнĕ çулхи зайомран 200 пин тенкĕлĕх ытларах çырăннă. Кунта халĕ пур коллективсенчи рабочисемпе служăщчисене те зайома çырăнма хутшăнтарассишĕн ĕçлеççĕ.

Вăрнар районĕнче 465 пин, Куванкинă—252 пин, Шăхасан—236 пин, Çĕмĕрле—149 пин тата Шăнкăртам районĕнче 149 пин тенкĕлĕх çырăннă. Ку районсем çĕнĕ зайома çырăнас йĕнĕпе малта пыраççĕ.

Республĕкре зайом çырăнасси малала сарăлса пырать.

Тивĕçлипе хатĕрленменнине пула

ИШЛЕЙ (хамăр корр.). Районри малта пыракан йалсоветсенче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Зайома пысăк активлăхпа çырăнса илеççĕ. Шетмĕпуç йалсоветĕнчи колхозсенче (йалсовет председателĕ Матвейĕв) зайома 6.560 тенкĕлĕх çырăннă. Сарчак йалĕнче зайом уполномоченнăйĕ пулса ĕçлекен К. Й. Йегоров йулташ иртнĕ çулта та зайом уполномоченнăйĕ пулса ĕçленĕ. Çĕнĕ зайома сарас ĕçре вăл лайăх тĕслĕхсем кăтартать.

Тельмăн йачĕпе тăракан колхоз членĕсем А. Гаврилов, П. Йегоров, А. Сушкавăв, А. Йакăвлĕв; „Красный борец" колхоз членĕсем М. Дмитрийĕв, Д. Кондратйĕв, И. Йакăвлĕв, Андрейĕв йулташсем çĕнĕ зайома илме çырăннă кунах укçине çурри тÿленĕ.

Мăнал йалсоветне кĕрекен „Тимĕрçырми" колхозра иртнĕ çулхи зайома 800 тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçалхи зайома 1.105 текĕлĕх çырăннă. Зайома илме çырăнасси сарăлсах пырать.

Çапах та, пĕтĕмĕшпе илсен, районра çĕнĕ зайома çырăнасси начар пырать-ха. Ийулĕн 9-мĕшне 162.285 тенкĕлĕх çеç çырăннă. Ĕç кайа йулса пыни çакăнтан килет: районри организацисем (уйрăмăнах райфинпайĕпе перекет касси) зайома çырăнса илес ĕçе хатĕрленмесĕр кĕтсе илнĕ. Ишек йалсоветне зайом çырăнмалли хутсене (подписной листоксене) ийулĕн 5-мĕшĕнче çеç çитерсе панă. Ишлей-Покровски йалсоветĕнче (район центрĕ) çĕнĕ зайома ийулĕн 6-мĕшĕнче çеç çырăнма пуçланă. Йалсовета кĕрекен Хачăк йалĕнче пайан кун та чылайĕшне зайом çырăнтарас ĕçе хутшăнтарман.

Ĕççыннисем зайома илме çырăнасшăн, вĕсем зайом укçи çĕршыва татах та вăйлатма, халăхсен пурнăçне лайăхлатма кайнине пĕлеççĕ. Анчах вĕсене ĕçре тивĕçлипе йертсе пыманни, организацилеменни кансĕрлет. Йалсоветсенчи зайом уполномоченнăйĕсен составне ку вăхăта çитсе те райĕçтăвком президиумĕнче пăхса туха çирĕплетмен.

Т. М.

Зайом хроники

КАНАШ. Хула совечĕпе халăх сутĕнче ĕçлекенсем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома пурте пĕр уйăх ĕçукçи чухлĕ çырăнчĕç. Çĕнĕ зайома ытти учрежденисемпе предприйатисенче те чылай рабочисемпе служăщчисем пĕрер уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнаççĕ.

И. Çтепанăв.

ÇĔРПУ. Кăшаркасси йалсоветĕнчи „Пионер" колхоз колхозникĕсем çĕнĕ зайома 3.750 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Колхозра зайома çырăнма Никитин, Большаков тата М. Иванов бригадирсем пулăшаççĕ.

А. Иванов

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Паймашри инвалидсен вĕрен йавакан ертелĕнче ĕçлекенсене районри колхоз шкулĕн директорĕ Дерстуканов йулташ Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомĕ çинчен ăнлантарса пачĕ. Çакăн хыççăнах инвалидсем зайом кăларнишĕн хавасланса 1.945 тенкĕлĕх зайом çырăнчĕç. Инвалид рабочисенчен С. Çеменăвпа Н. Борисăв йулташсем 50-шар тенкĕлĕх, Архипăвă—25 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Служăщчисем çĕнĕ зайома пурте пĕр уйăх ĕçукçи чухлĕ çырăннă.

В. Çтепанăв

Сталинла 7—8 мĕлйард пăт тĕш тырă шăн социалисăмла ăмăртава анлăн сарар!

Кăнтăр йенчи районсенче васкамала

Ийулĕн 9-мĕшĕнче Патăрйелĕнче пилек районри—Патăрйел, Шăнкăртам, Шăмăршă, Турхан тата Йелчĕк парти райком секретарĕсен, райĕçтăвком председателĕсен, çĕрĕç пай пуçлăхĕсен, Хатĕрлĕв Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйсен, финанс пай пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Çак канашлăва ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. Спасăв йулташ йертсе пычĕ. Канашлура Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Коротков, парти Чăваш Обкомĕн йалхуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Кольцов йулташсем тата ытти ответлă работниксем пулчĕç.

Канашлу малтанхи ыйтупа—тырпулсене уйран пуçтарса кĕме мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен—райком çекретарĕсен отчочĕсене итлерĕ.

Парти райком çекретарĕсен отчочĕсем тăрăх, çÿлте каланă районсенче тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕç йапăх пыни курăнчĕ. Патăрйел районĕнче уй ĕçне хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене халĕ те тÿрлетсе çитермен. Йалхуçалăх машинĕсем йусавсăр. Иртнĕ çулта тырă типĕтмелисем 51 пулнă, хальвĕсенчен 89 кăна ĕçлеме пултараççĕ. Районĕпе 550 ампар, вĕсенчен 189 ăмпара кăна киве тырăсенчен пушатнă, анчах дезинфекци туман-ха. 301 витнĕ итемрен 83 итем кăна йĕркелĕ. 49 колхозран 13 колхозра çеç ĕç планĕсем тунă.

Ĕç нормисене сÿтсе-йавса çирĕплетмен. Кивĕ нормăсемпех ĕçлеççĕ.

Турхан районĕнче тырпулсене пухса кĕме татах начар хатĕрленеççĕ. 43 колхозран 18 колхозра çеç ĕç планĕсем пур. Пурĕ 332 ампар, анчах вĕсем пĕри те çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр мар. Йалхуçалăх машинисене начар йусаççĕ.

Уйрăмах транспăрт хатĕрĕсем çителĕксĕр. „Хĕрлĕ флот" колхозра 6 лаша пуçне пĕр урапа çеç тивет. Турхан районĕнче социалисăмлă ăмарту начар сарăлса пырать. 24 колхозра кăна ăмарту договăрĕсем тунă, анчах вĕсене тĕрĕслесе пымаççĕ. Государствăна тĕш тырă памалли обязательствисене çитерсе паман.

Турхан районĕнче ĕçсем йапăх пулса пыни çакăнтан та килет: кадрсене вĕрентсе çитĕнтерес вырăнне, вĕсемпе выляççĕ. 4 çул хушшинче 43 колхозра 83 председателе улăштарнă.

Йелчĕк районĕнче те ĕçсем чаплах мар. Ĕç планĕсене 27 колхозра çеç тунă. Ампарсене тасатса хатĕрлесе çитермен.

Шăмăршă районĕнче тĕлли-палли сĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе такамсем туса парасса кĕтеççĕ кунта. Райĕçтăвком председателĕ Рйабин районра миçе колхозра ĕç планĕсем тунă çинчен каласа пама пултараймасть. Пĕлтĕр Шăмăршă районĕнче 30 сушилкă пулнă, кăçал вĕсенчен 11 çеç йулнă. Урапасем, миххĕсем çитмеççĕ. „Красная нива" колхозра 60 лаша пуçне 20 урапа тивет.

Шăнкăртам районĕнче те ĕçсем ытти районсенчен лайăх мар. Çак районра транспăрт ĕçĕ пит начар пырать. Районĕпе вăтам шутпа 7 лаша пуçне пĕр урапа тивет. Кунта кăçал çĕнĕрен МТС организациленет. Анчах Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ку тĕлĕшпе начар пулăшса пырать.

Отчотсем пĕтнĕ хыççăн Коротков тата Спасăв йулташсем тухса сăмах каларĕç. Вĕсем кĕске вăхăтрах тырпулсене пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленсе çитесси, ку ĕçре пулнă йанăшсене халех пĕтересси çинчен чарăнса тăчĕç.

***

Çавнашкалах канашлу укçа-тенкĕ пухас, аш-какай хатĕрлес, çĕнĕ строительствăсене ĕç вăйĕ парас ыйтусене сÿтсе-йаврĕ.

Икĕ район ăмăртăвĕ

Тутаркас—Йетĕрне

Тутаркас районĕ йалхуçалăх ĕçĕсем тĕлĕшпе Йетĕрне районĕпе ăмăртса ĕçлет. Çак иртнĕ кунсенче Тутаркас районĕнчи делегаци Йетĕрне районне кайса колхозсем тырпулсене уйран пуçтарса кĕме мĕнле хатĕрленсе пынине, Йетĕрне районĕнчи делегаци Тутаркас районне килсе тĕрĕслерĕç.

Делегацисем тĕрĕслÿрĕ çакна палăртрĕç: Тутаркас районĕ ирхи сĕртме сухи планне 100 процент, Йетĕрне — 108 процент тултарнă. Икĕ районĕнче те йалхуçалăх машинĕсене йусас ĕçсем йулса пыраççĕ. Тутаркас районĕнче 226 жнейкăран 131 жнейкă, 291 молотилкăран 188 молотилкă, 268 вейăлкăран 165 вейăлкă; Йетĕрне районĕнче—214 жнейкăран 210 жнейкă, 200 молотилкăран 170 молотилкă, 214 вейăлкăран 21 вейăлкă çеç йусанă. Урапасем, çавасем, лашасене кÿлмели хатĕрсем, шăналăксем, миххĕсем, витнĕ итемсем хатĕрлесси Тутаркас тата Йетĕрне районĕсенче начар пулса пырать. Ампарсемпе складсене дезинфекцилес ĕç пуçланманпа пĕрех. Тутатăр ас районĕнче 76 витнĕ итем, 7 авăн, тырă типĕтмелисем—15, ригăсем—6, çĕрулми усрамалисем—37 тасатса дезинфекциленĕ.

Тутаркасри МТС ку вăхăтченех сложнăй молотилкăсене йусаса çитермен. 18 молотилкăран 14 молотилкăна çеç йусанă.

Йетĕрне районĕнчи Волчи Долинăри колхозра ампарсене тасатма пуçăнман. Çавнашкалах çĕнĕ тырра хумалли ампарсене те тасатмаççĕ. Тутаркас районĕнчи делегаци Йетĕрне районĕнче тĕрĕсленĕ вăхăт тĕлне унта тырпулсене пухса кĕмелли ĕç планĕсене пĕр колхозра та туман.

Буденный, Кирăв йачĕпе тăракан тата „Крестьянская газета" колхозсен уйра тырпулсем вăйлăн çитĕнеççĕ, уйсем таса. Калинин йачĕпе тăракан колхозра çумкурăксене начар çумламан. Кунта вăрлăх участкисене йупасем лартса палла туман.

Тутаркас районĕ çум çумлас ĕçе халĕ те пĕтермен. Районра „Хĕрлĕ паттăр", „Свобода", „Красное Сормово" колхозсем тырпулсене уйран пуçтарса кĕме кăтартулăн хатĕрленсе пыраççĕ. Çав хушăрах „Çĕнĕ çул" тата Буденный йачĕпе тăракан колхозсем йалхуçалăх машинисене йусаса çитермен. Çак колхозсенче ĕç планĕсене тума пуçăнман. Тутаркас районĕнче ăмăрту договăрне тĕрĕсленĕ чухне 760 колхозник хутшăннă. Тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕçре 86 стахановец палăртнă.

Икĕ районри делегаци те кашни района тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе хатăклă, конкретлă сĕнÿсем парса хăварнă. Йетĕрне районĕнчи делегаци Тутаркас районĕ Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выçтăвкине лайăх хатĕрленнине палăртнă. Çавăнпа Йетĕрне районне Тутаркас районĕн олимпĕ тăрăх йалхуçалăх выçтăвкине мĕнле хатĕрленнине колхозсем хушшинче тĕрĕслессине организацилеме хушса хăварнă.

Хĕрсех утă çулаççĕ

Йетĕрне. Районри колхозсем утă çулма тухрĕç. Утă çулма тухнă кунах, ăмăртса ĕçленипе колхозниксем ĕç тухăçлăхне вăйлăн ÿстерсе пыни курăнчĕ. Максим Горький йачĕпе тăракан колхоз 23 гектар çаран утти çулчĕ. Ватă старикĕсем те пĕр-пĕрипе ăмăртаççĕ. Акă, 74 çулхи Е. Максимăв тата 68 çулхи Çтепанăв колхозниксем утă çулас нормăсене 140—150 процент таран тултарса пычĕç. „Çĕнĕ çул", „Спутник колхозника" колхозсем те утă çулса пĕтерчĕç. Çак колхозсенче утă çулнă çĕрте колхозниксем хушшинче ăмăртса ĕçлесси вăйлăн сарăлса пычĕ. Хăшпĕр колхозсем хальутăна типĕтсе капана хывма тытăнчĕç.

С. Рябиновский.

Тырпулсене пухса кĕресси çинчен ытти материалсем 2-мĕш страницăра

Тырпулсене ăнаçлăн пухса кĕресси—тĕплĕн хатĕрленнинчен килет. Пур йенĕпе те хатĕр пулар, тырпулсене кĕске срукра пухса кĕрер!

Кашни колхозăн тырпулсене пухса кĕмели ĕç планĕ пулмала

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти июнĕн 23-мĕшĕнче „1938 çулти тырпула пухса кĕртесси çинчен" йышăннă постановленире: „Тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланаччен машинă-трактăрлă станцисем, колхозсемпе совхозсем тăрăх тырпулсене пухса кĕртмели ĕç планĕсем туса хумала. Çак плансем çинче комбайнсемпе тата тырпулсене пухса кĕртмели пĕчĕкрех машинăсемпе тĕрĕс усă курассине палăртмала; ĕç калăпăшне ĕç срукĕсене, ĕçлекен çынсене тата механикăпа лаша вăйĕсемпе тата транспăрт ĕçхатĕрĕсемпе тĕрĕс усă курассине палăртмала. Тырпулсене пухса кĕртмели плансене колхозниксен пухăвĕсенче тата МТС-семпе совхозсенче производствăлă канашлусенче сӳтсе-йавмала", тенĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн кăтартăвĕнче тырпулсене пухса кĕртмели ĕç планĕсен тĕп шухăшĕ лайăх палăрса тăрат. Кашни колхозăн тата МТС-н планĕнче—тырпулсене вăхăтра тата тăкаксăр пуçтарса кĕрессине, государствăна йалхуçалăх продукчисене хăй вăхăтĕнче тата пĕтĕмпех парса татассине кăтартмала.

Тырпулсене комбайнсемпе пуçтарса кĕнĕ хушăрах пирĕн колхозсен тырпулсене жнейкăсемпе тата алпа та вырмала. Комбайнсемпе çырма-çатралă вырăнсенче ĕçлеме çук, кун пек вырăнсенче ĕçлесен комбайнпа ĕçлес тухăç ытла та пĕчĕк пулнă пулĕччĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ тырпулсене пуçтарса кĕмели ĕç планĕнче жнейкăсемпе тата алпа выгассине тĕплĕн палăртса хуни кирлĕ.

Тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕç—колхозсенче кĕрхи тырăсене акса хăварма çĕре çемçетсе хатĕрлес, хăмăлсене сухалас, авăн çапас, тырă турттарас тата ытти ĕçсемпе пĕр вăхăтра пулса пырат. Тырпулсене пухса кĕмели ĕç планĕнче—вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухасси тĕп вырăн йышăнса тăмала. Сиенлĕ шухăша — ĕçсене черетпе туса пырассине тĕпрех пĕтерес пулат. Йалхуçалăхĕн пур ĕçĕсене те пĕр-пĕрине çыхăнтарса пымала.

Рабочи план тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленессине татса парат. Унта машинăсене вырнаçтарса тухни, агрегатсем çумне участкăсем çирĕплетсе лани, çынсене уйăрса, уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетни паллă пулмала.

Тырпулсене пухса кĕмели ĕç планĕсене тăвасси МТС-семпе колхозсенче мĕнле пырат-ха? Тӳрех калас пулат, плансем тăвас ĕç начар пырат. Ку тĕлĕшпе çĕрĕç органĕсем колхозсене йертсе пыманнине, вĕсене пулăшманнине палăртса хăвармала. Çĕрпӳ районĕнчи мĕн пур колхозсенчен 36 колхозра кăна ĕç планĕсем тунă. Чылай колхозсенче ĕç нормисене пăхса тухса çирĕплетмен. Ĕлĕкхи нормăсемпех ĕçлеççĕ. Нормăсене пăхса тухнă чухне стахановецсен опычĕсене шута илни çук.

Патăрйел районĕнчи МТС-че те ку вăхăта çитичченех çирĕп ĕç планĕ çук. Молотилкăсене, комбайнсене мĕнле колхозран мĕнле колхоза илсе çӳремели маршрут тумав. Çакă ĕнтĕ паллах, тырпулсене пуçтарса кĕнĕ, авăн çапнă чухне пысăк чăрмав кӳме пултарат. Комбайнерсем çитмеççĕ.

Йелчĕкри МТС-че те çавнашкалах ĕç планĕ çук. Комбайнерсем çитмеççĕ. Çитес кунсенче тырă вырма тухмала, анчах комбайнсемпе ĕçлеме участкăсене уйăрса çитермен.

Шăнкăртам, Канаш, Шăхасан районĕсенчи колхозсенче те тырпулсене пуçтарса кĕмели ĕç планĕсене кашни колхозрах туса çитермен.

Хăшпĕр колхозсенче плансене лайăх тунă. Акă, Йантушри (Çĕрпӳ р.) „Çамрăк вăй" колхозра кашни машинă, агрегат çумне çынсене çирĕплетсе тухнă. Нормăсене пăхса тухса çирĕплетнĕ чухне стахановецсен паха опычĕсене шута илнĕ.

Ĕç вăйне, машинăсене тĕрĕс вырнаçтарса тухни,—тырпулсене вăхăтра тата тăкаксăр пуçтарса кĕрес ĕçе татса парат. Тырпулсене вырма тухас вăхăтчен шутлă кунсем йулчĕç. Çак хушăра кашни колхозăн, МТС-н тырпулсене кĕске срукра тата тăкаксăр пуçтарса кĕме, государствăна таса тырă, МТС-не натурплатă тыррине вăхăтра парса татма пулăшакан ĕç планĕсене туса çитерсе, вĕсене колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тĕплĕн сӳтсе-йавмала.

Гр. Калинин.

Кăçал Чăваш республикĕнчи колхозсен уй-хирĕсенче вăйлă тырпулсем çитĕнчĕç. Клевĕр та вăйлă пулчĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сăпайкасси йалсоветĕнчи (Ишлей р-нĕ) „Труд" колхоз бригадирĕ Никита Колъцов лобогрейкăпа клевĕр çулат.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Хаљ те план туман

Чулкассинчи (Шупашкар р.) „Çăлту" колхоз тырпулсене пухса кĕме пит начар хатĕрленсе пырат. Тырпулсене уйран вăхăтра тата тăкаксăр ăнаçлă пуçтарса кĕрессине ĕç планĕ татса парат. Апла пулсан та „Çăлту" колхозра план туса хатĕрлемен. Колхозниксемпе колхозницăсене ĕçсем çумне çирĕплетсе тухман пирки, вĕсем мĕнле ĕçре ĕçлессине пĕлмеççĕ.

Колхозăн 34 лаша шутланат. Кӳлмели хатĕрсем 20 лашан çеç пур. Тырпулсене пуçтарса кĕнĕ чухне, хаљхи пекех ĕçлесен, 14 лаша ĕçе хутшăнма пултараймаççĕ. Кĕлтесем турттарма вĕренсем çитмеççĕ, урапасене сĕрмелине кӳрсе килмен.

Утă çулма тухмала. Анчах колхозниксен çавасем çитмеççĕ, пуррисене туптатман. Çавна пула ĕнтĕ кунта хаљ тин çавасем хатĕрлеме тытăннă.

Колхозра 2 бригадă. Вĕсен хушшинче социалисăмлă ăмăртăва пуçарса пыни çук. Пĕр жнейкă, 1 молотилкă пур, çаксене хаљ те йусаман. Колхоз правленинче ĕçлекенсем ку машинăсене тырă вырнă вăхăтра йусама шутлаççĕ пулас.

Витнĕ итем тесе йат панăскер пĕрре пур. Анчах унта авăн çапма май çук, мĕншĕн тесен ытла та пĕчĕк. Çĕнĕ тырра хума ампарсемпе складсене хатĕрлесе хурасси çинчен каламали те çук. Вĕсене ку вăхăтченех тасатман, дезинфекци туман.

Правлени шутланă тăрăх, тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ чухне колхозниксем ваљљи столовăй та, ачасем ваљљи йаслĕ те пулмаст. Çаксене организацилеме пур майсем те пур. Кунта ĕнтĕ колхоз правлени тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕç çине сиăелтен пăхни курăнат. Çавăнпа та „Çăлту" колхозра пур ĕçсем те йулса пыраççĕ.

Тырпулсене вырма тухас вăхăт нумай йулмарĕ. Çак хушăра „Çăлту" колхозăн утă çулса пĕтермеле, тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе çитмеле.

А. Николайĕв.

„Ишлей" колхозĕнче йĕркелĕх çук

ИШЛЕЙ, июлĕн 8-мĕш (хамăр корр.). Ишлей-Покровскинчи „Ишлей" колхозра июлĕн 7-мĕшĕнче клевĕр çулма тухрĕç. 14 гектар клевĕр тата 25 гектар улăх ути çулмала. Колхоз хĕрӳ ĕçе кĕчĕ ĕнтĕ. Акă çитес кунсенчех ыраш та пиçсе çитет. Кăçал 90,47 гектар ыраш, 109 гектар çуртри пухса кĕмеле.

Умра пысăк ĕçсем тăраççĕ. Вăл ĕçсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса ирттерме кирлĕ. Плансăр ĕçлеме çук. Анчах та колхоз председателĕ Охотин: „Пире план мĕн тума кирлĕ, епĕр çавах план тăрăх ĕçлесе пыраймастпăр",—тет. Производствăлă план çуккине пула 14 гектар клевĕре 3 кун хушшинче те çулса пухса кĕреймен. Колхозра ĕçлекенсем (подросткăсемпе пĕрле) 240 çын шутланаççĕ. Апла пулин те малтанхи кун клевĕр çулма 9 çын, иккĕмĕш кунĕнче 26 çын анчах тухнă.

Колхоз председателĕ Охотинпа 2-мĕш бригадăн бригадирĕ А. Соколов йулташсем:—нимĕн те тума пĕлместпĕр, колхозра ĕç дисциплини çук, колхозниксем чĕнсен те ĕçе тухмаççĕ,—теççĕ. Ку вăл тĕрĕс мар. Сăлтавĕ кунта пĕтĕмпех ĕçе организацилеме пĕлменнинче, колхозниксем хушшинче ĕçлеменнинче.

Уйрăм бригадăсене тырпул пухса кĕмели участкăсене çирĕплетсе паман. Звеносем çук. Нумай колхозниксем хăйсем мĕнле ĕçре ĕçлемелине пĕлмеççĕ. Социалисăмлă ăмăрту çинчен шутламаççĕ те кунта. Колхоз правленийĕпе бригадирсем тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕçе пачах та организацилемен. 3 жнейкăран пĕри те йусавлă мар. Пĕр жнейкин „Зубчатая жестерня № А—3" текен пайĕ çук.

80 гектар çинчи тырпулсене пухса кĕме МТСтанципе догăвăр тунă. Комбайнпа хăш участкăсенче пухса кĕмелине палăртса хуман, комбайн патĕнче ĕçлеме колхозниксене уйăрса хатĕрлемен. Шăналăксемпе михĕсем (100 михĕ çитмест) çителĕклĕ мар. Витнĕ итемсемпе тырă хывмали складсене тасатса дезинфекци туса хатĕрлемен. 2-мĕш бригадăра кăна 10 урапа çитмест.

Чылай колхозсем тырпулсене тĕплĕн çумкурăксенчен тасатса тăраççĕ. Анчах та „Ишлей" колхозĕнче тырпулсем çинчен çум çумламан.

Районри организацисенче район центрĕнчи „Ишлей" колхоз начар ĕçлени çинчен пĕр майах калаçаççĕ. Анчах та ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартассишĕн тăрăшни çук. Колхозниксем каланă тăрăх, колхоз председателĕ Охотин пĕр майах ĕçсе çӳрет, бригадирсем хăйсем ĕçре пулса йĕртсе пымаççĕ. Çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем çавна та курмаççĕ пулас. Çипе тăрсах „Ишлей" колхоз ĕçне йĕркелемеле.

Т. Майорăв.

Пысăк тупăш паракан фермă

ВОЛЧИ-ДОЛИНĂРИ (Йетĕрне р.) Калинин йачĕпе тăракан колхозра сĕт-çу ферми организацилени 6 çул тултарчĕ. Çак хушăра фермăри выљăхсене ăратлантарса вĕсенчен ытларах тупăш илес тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнӳсем тунă.

Фермă пуçлăхĕ Дербенйов йулташ фĕрмăра ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Вăл йаланах ĕнесен ăратлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Вырăнти ăратсăр ĕнесене ăратлă вăкăрсемпе чуптарса — метизаци урлă ăратлантарса пынă. Çапла ĕçленипе фермăри ĕнесем ăратланса пычĕç, вĕсен шучĕ те ӳссе пычĕ. 1933—34 çулсенче ăратлă ĕнесем пачах пулман пулсан, хаљ хĕрлĕ горбат ăратлисем 73 пуç ĕне шутланат. Фермăри çитĕннĕ ăратлă ĕнесенчен 28 пуçа районри ăрат кĕнеки çине кĕртнĕ, вĕсенчен 14 пуç ĕнене государствăн ăрат кĕнеки çине çырнă.

Ĕнесенчен сĕт суса илесси çулсеренех ӳссе пырат. Иртнĕ çулта вăтамран кашни ĕнерен 2.750 литр сĕт суса илнĕ. Çавна май тупăш илесси те ӳсет. 1935 çулта колхоз фермăран 25.128 тенкĕ, 1936 çулта —28.075 тенкĕ, 1937 çулта—42.303 тенкĕ тупăш илнĕ.

Дербенйов йулташ йертсе пыракан фермă районри лайăх тата тупăшлă фермăсенчен пĕри шутланса тăрат.

Фермăра ĕçлекенсем кăçал кашни ĕнерен 3 пин литр сĕт тата фермăран 50 пин тенкĕ тупăш илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ник. Цветков.

Тырпула пухса кĕме хатĕр

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Турханти „Крестьянин" колхоз уйри тырпула пухса кĕме тимлĕн хатĕрленет. Йалхуçалăх машинисене йусаса çитернĕ. Машинăсемпе ĕçлеме колхозниксене уйăрса çирĕплетсе хунă. Колхозăн 2 жнейкă, вĕсен пур пайĕсем те çитеççĕ. Итем çине пĕр молотилкăна йусаса вырнаçтарса лартнă. Лаша таврашĕсем çителĕклĕ хатĕрленĕ, урапасем пурте йусавлă.

Колхозăн 4 итем. Вĕсене хырса тасатса тухнă. Икĕ витнĕ итемĕн çийĕсене çĕнĕрен витсе хунă.

Клетсене дезинфекцилеççĕ. Михĕсене, шăналăксене çителĕклĕ хатĕрленĕ. Тата тырă турттармали йешчĕксене йатарласа тутарса хунă.

Колхозниксене ваљљи тырă вырнă чухне столовăй пулат. Хĕрарăмсем çум çумлас ĕçре тăрăшса ĕçлеççĕ. Халĕ иккĕмĕш хут суртрисене çумкурăксенчен тасатса тухнă. Тулă тата сĕлĕ пуç кăларчĕ, пăрçа чечеке ларнă.

„Крестьянин" колхоз кăçал гектартан 100 пăтран кайа мар тĕштырă туса илес задачăна пурнăçа кĕртетех.

Й. Çигайĕв.

Массăлă физкуљтурăшăн

Социалисăмлă общĕствăн задачисенчен пĕри—ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен çирĕп ăру вĕрентсе çитĕнтерессии пулат. Ленин— Сталин партийĕ, Совет правителĕстви, халăхсен йуратнă çулпуçĕ аслă Сталин йулташ пирĕн çĕршывра физкуљтурă ĕçне вăйлатса пырассишĕн питĕ хытă тăрăшаççĕ. Ленин—Сталин партийĕпе Совет правителĕстви физкуљтурă çине мĕнле пысăк тимлĕх хунине çак фактсем те уççăн кăтартса параççĕ. Совет влаçĕ пулни 20 çул тултарнă тĕле физкуљтурă ĕçне 500 мĕлйун тенкĕ укçа панă. Пирĕн Совет Союзĕнче 650 стадион, 7 пин спорт площадки, 350 шыв станцисем, 3 пине йахăн йĕлтĕр станцисем, 4 физкуљтурă институчĕ, 25 техникум пур. Виççĕмĕш пилĕкçуллăх планĕ тăрăх физкуљтурă ĕçне тата 600 мĕлйун тенкĕ укçа пама палăртнă.

Совет Союзĕнче, социалисăм çĕршывĕнче, физкуљтурăпа спорта аталантарма кирлĕ условисем пурте çителĕклĕ. Совет физкуљтурникĕсен çарĕ çулран-çул ӳссе сарăлса пырат.

Чăваш республикинче те физкуљтурă йухăмĕ малала кайса пырат. Правителĕствă республĕкре физкуљтурă ĕçне кашни çулах укçа нумайрах та нумайрах парат. 1938 çулта кăна çак ĕçе 200 пин тенкĕ укçа панă. Кунсăр пуçне физкуљтурă организатăрĕсем-инструктăрсем вĕрентсе хатĕрлеме 79 пин тенкĕ панă.

Анчах физкуљтурăпа спорт ĕçне малашне тата аталантарса пырас пулсан, çак ĕçе йертсе пырассине лайăхлатмала. Халĕ пирĕн республĕкри физкуљтурăпа спорт йухăмне йертсе пыракан организацисем массăлă физкуљтурăпа спорт ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ-ха.

Республĕкри предприйатисенче, МТС-че, колхозсенче нумайĕшĕсенче физкуљтурă организацийĕсем пачах та çук. Физкуљтурă организацийĕсем пур предприйатисенче, МТС-че тата колхозсенче те физкуљтурă коллективĕсенче çамрăксем питĕ сахал тăраççĕ. Çапла, Çĕмĕрлери комбинатра çамрăксем 700 çынна йахăн, физкуљтурă коллективĕнче 75 çын çеç, вĕсенчен те 22-шĕ футбол командисенче тăраççĕ. Канашри вакунсем йусакан савăтра çамрăк рабочисем 1000 çын ытла пулсан, „Локомотив" спорт общĕствинче 150 çын çеç шутланат. Машинă-трактăр станцисенче, колхозсенче физкуљтурă коллективĕсем питĕ сахал. Колљцовкăри (Вăрнар р.), Ишекри (Ишлей р.), Йелчĕкри (Куславкка р.) пек пысăк колхозсенче те физкуљтурă коллективĕсем çук.

Массăлă физкуљтурă ĕçне паракан пысăк укçа-тенкĕ халĕ те ытти ĕçе саланса пĕтет. „Динамо", „Спартак", „Темп" спорт общĕствисем çулталăкне спорт ĕçĕпе вунă пин тенкĕ укçа расхутлаççĕ. Анчах çак укçа-тенкĕрен 75 проценчĕ футбол командисемшĕн пĕтереççĕ, массăлă ĕçе—„ГТО" значокĕсене хатĕрлес ĕçе кăшт çеç расхутлаççĕ.

„ГТО" значокĕсене илме нормă парасси совет çамрăкĕсене ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен çирĕплетмели массăлă физкуљтурă ĕçĕн тĕп форми пулса тăрат. Çапла пулин те „ГТО" значокне илме нормă парас ĕç республĕкре начар пырат. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республĕкре „ГТО" значокĕ илме 4.330 çын хатĕрлемеле пулнă пулсан, аран-аран 1.655 çын хатĕрленĕ. Кунта та колхозлă йал кайа йулса пырат. Контролљлĕ задани тăрăх „ГТО" значокне илнисем колхозсенче 2.500 çын пулмала, халĕ 473 çын çеç хатĕрленĕ. Канаш, Çĕмĕрле, Трак тата Елĕк районĕсенчи колхозсенче физкуљтурă ĕçне организацилес тĕлĕшпе тӳсме çук начар ĕçлеççĕ. Çакăншăн чи малтан физкуљтурăпа спорт ĕçĕн республĕкри комитечĕ айăплă.

Массăпа çыхăнса тăманнипе, çамрăксем хушшинче ĕçлеменнипе ĕç çакăн пек начар пырат те ĕнтĕ. Массă хушшинче, çамрăксем хушшинче ĕçлемеле, вĕсем физкуљтурă вăйăпе питĕ интересленнине асра тытмала. Пĕр факт илсе кăтартăпăр. Нумай пулмаст Сăр шывĕ тăрăхĕнчи районсенчи физкуљтурниксен спартакиади пулса иртрĕ. Çак спартакиадăра ку таранччен Чăваш республикĕнче тунă рекордсенчен иртсе кайса çĕнĕрен 5 рекорд тунă. Çакна шута илмеле. Физкуљтурă ĕçне хапрăк-савăта, колхоза, совхоза, МТС-не, шкула куçармала.

Чăваш республикĕ спортăн чылай йенĕсем тăрăх кайа йулса пыни те массăлă спорт ĕçне çителĕксĕр сарса пынинченех килет. Çамрăк спортсменсене тăрăшса вĕрентсе çитĕнтерес вырăнне, физкуљтурăпа спорт ĕçĕн уйрăм руководителĕсем пĕр-пĕр спортсмен хăйĕн пултарулăхне кăшт кăтартсанах, унăн хыççăн ухатана кайаççĕ, ăна илĕртеççĕ, йăпатаççĕ. Çапла, нумайах та пулмаст, „Динамо" спорт общĕстви „Спартак" общĕствин лайăх выљакан футболисĕсене—Зефирăвпа Афанасйĕв йулташсене хăй патне куçарма хăтланнă. Паллах, çакнашкал йурăхсăр ĕç физкуљтурниксене пăсат, вĕсем хушшинче „укçашăн çунас" шухăша, мăнкăмăлланас, „епĕ çеç пултаратăп, епĕ çеç маçтăр" текен сиенлĕ шухăша сарат.

Çакнашкал примерсене татах илсе кăтартма пулат. Вĕсем пурте пирĕн спорт йухăмĕнче совет спорчĕшĕн йурăхсăр, буржуалă йăла халĕ те пурри çинчен калаççĕ. Физкуљтурăпа спорт комитечĕн, ирĕкле спорт общĕствисен руководителĕсен çавнашкал практикăна хирĕç хытă кĕрешмеле.

Спорт общĕствине йертсе пырас ĕçе кĕрсе кайнă халăх тăшманĕсем оборонăлă спорт ĕçне йури чарса тăнă. Пирĕн республĕкре нумай çул хушши автомобильпе мотоцикл спортне вăйлатас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Пирĕн условире автомобильпе мотоцикл спортне сарма кирлисем пурте пур. Анчах иртнĕ çулта физкуљтурăпа спорт комитечĕн автомобильпе мотоцикл ĕçне вĕрентекен пункчĕнче 60 çын çеç шофер-професионалсем вĕрентсе кăларнă. Кăçал, 1938 çулта, 27 çын вĕрентсе кăларнă. „Учитель" спорт общĕствисĕр пуçне, „Спартак", „Динамо" „Темп", „Буровестник" спорт общĕствисем автомотоцикл спорт ĕçне сарасси çине сиăелтен пăхаççĕ. Çавăн пекех пирĕн республĕкре парус, шыва ишес спорт тата пурте хутшăнма пултаракан гимнастикă питĕ начар тăрат.

Паллах, физкуљтурă йухăмĕнчи пысăк çитменлĕхсене пĕтересси физкуљтурăпа спорт комитетĕнчен, професçилĕ союзсен обкомĕсенчен килет. Партипе правителĕствă çак организацисене пĕр майах пулăшаççĕ пулин те, вĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ ха. Ку тарана çитсе те физкуљтурă коллективĕсенче бољшевикла йĕркелĕх туман. Колхозсенче физкуљтурă ĕçне организацилессишĕн тивĕçлипе тăрăшни çук. Физкуљтурă инструктăрĕсен кадрĕсене çирĕплетес ĕç начар тăрат.

Физкуљтурă—комсомолăн ĕçĕ. Анчах темĕншĕн, комсомол комитечĕсем нумайĕшĕ çак ĕçрен пăрăнаççĕ, физкуљтурă ĕçĕн конкретлă ыйтăвĕсене сӳтсе-йавмаççĕ. „Çамрăк бољшевик" хаçат та физкуљтурă ĕçĕнчен пачах уйрăлса кайни те тĕлĕнтерет вара.

Пирĕн физкуљтурă чи малта пыракании пулмала. Пирĕн физкуљтурă—халăх спорчĕ. Физкуљтурă ĕçне анлăн сарас ĕçре професçилĕ союзсен ирĕклĕ спорт общĕствисем тĕп вырăнта тăмала. Епĕр физкуљтурă ĕçне малала вăрăс тетпĕр пулсан, физкуљтурă организацисен хапрăк-савăтсенчи, колхозсенчи, МТС-чи коллективĕсем çине ытларах çаврăнса пăхмала, вĕсенче бољшевикла йĕркелĕх тумала, физкуљтурăпа спорт ĕçне çамрăксене пиншерĕн хутшăнтармала.

Нашилĕ 7 республикăн спартакиади çывхарса килнĕ май физкуљтурăпа спорт ĕçĕн пур формисене те пушшех анлăн сарса йамала.

Р. Шашков.

Хатĕр маррисем чылайах

ВĂРНАР. Районти малта пыракан Колљцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхозпа Булатăвăри Молатăв йачĕпе тăракан колхоз тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленсе çитрĕç. Булатăвăри Молатăв йачĕпе тăракан колхозра кашни бригадăрах ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ тырпула пухса кĕртесси çинчен йышăннă постановленисене сӳтсе-йавса, тырпулсене пуçтарса кĕртмели плансем тунă. Машинăсене йусанă. Жнейкăпа тырă вырмали лашасене уйрăм апат çине тăратнă. Лаша хатĕрĕсем йусавлă. Ампарсене çак кунсенчех дезинфекцилесе çитереççĕ.

Тырпула пуçтарса кĕртме Çавалкас Мăратри „Çуттала" колхоз та лайăх хатĕрленет.

Анчах, районра хатĕрлеме васкаман колхозсем те пур. Çĕнйал Йавăшри „Çĕнйал" колхоз пайанхи куна тырпула пуçтарса кĕме нихăш йенчен те хатĕр мар. Жнейкăсене тасатман. Турпулсене пуçтарса кĕртмели план çук. Лаша таврашсем хатĕр мар. Урапа пăти вырăнне йăмра çапписем лартса çӳреççĕ.

Çавăн пекех Тĕмпек тата Кивйахакасси колхозĕсем тырпула пуçтарса кĕртме начар хатĕрленеççĕ. Ку колхозсенче тырпулсене пуçтарса кĕртмели плансем çук. Кивйахакасси колхозĕнче çумкурăксене çумлас ĕçе те начар организациленĕ. Колхоз хирĕнче çумкурăкĕсем темĕн чухлех.

Тырпулсене пуçтарса кĕме тухасси нумай йулмарĕ. Çак кунсем хушшинче кашни колхозăн тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленсе çитмеле. Райçĕрĕç пайĕн колхозсене конкретлăн йертсе пымала.

Н. Козлов.

Кĕске срукра пухса кĕрессишĕн

ВĂРĂМ ХĂВАРИ (Йелчĕк районĕ) „Хуçав" колхоз членĕсем утă тата вика çулма тухрĕç. Ку колхоз тырпулсене уйран пуçтарса кĕме те тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Ĕç планĕ тунă, çавăн пекех кашни бригадăрах ĕç планĕсем пур. План тăрăх кĕрхи тырăсене 6 кунта, суртрисене 7 кунта вырса пĕтермеле.

Колхозра 4 бригадă. Кашни бригадăра жнейкă. Колхозăн пĕр молотилкă.

Тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ вăхăтра 4 политвулавçă — пулат. Бригадăсенче стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ. 250 çын ваљљи столовăй, ачасем ваљљи йаслĕ пулат.

Г. Иванов

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Массӑлӑ агитаци ӗҫӗн опытне ҫирӗплетер

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлама хатӗрленнӗ май ПСК(б)П Хӗрлӗ Чутай райкомӗ партилӗ политикӑлӑ, партилӗ массӑлӑ ӗҫе анлӑн сарса йачӗ. Районӗпе РСФСР тата ЧАССР Конституцисене, суйлав Положенисене вӗренекен кружоксем 502 ӗҫленӗ. Кружоксенче 23.982 ҫын тӑнӑ. Кунсӑр пуҫне 514 суйлавҫӑна: старик-семпе карчӑксене, ачалӑ арӑмсене килӗсене кайса вӗрентнӗ. Вӑл кружоксенче ӑнлантарас ӗҫе 645 агитатӑр туса пынӑ. ССРС Верховнӑй Советне суйлама хатӗрленнӗ чухне кӑштах сахалтарах пулнӑччӗ,— кружоксем 485 агитатӑрсем 556 пулнӑ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ кружоксем йышланни тата агитатӑрсен хисепӗ ӳсни курӑнать. Колхозсенчи тата йалсенчи агитацилӗ ӗҫе йертсе пыма районти агитколлективра тӑракан агитатӑрсене уйӑрнӑ. 39 ҫын агитатӑрсем йала тухса кайас умӗн, вӗсемпе калаҫусем туса иртрнӗ. Кашни уйӑхрах виҫшер хут пухса ҫеминарсем иртрнӗ.

Райком йанӑ агитатӑрсем колхозри агитатӑрсемпе вулавҫӑсене тата калаҫу иртерекенсене пухса, пӗтӗмпе 10? ҫеминар иртрнӗ. Ҫав ҫеминарсенче Конституцисемпе суйлав Положенисене вӗрентессине мӗнле туса пымалли ҫинчен сӳтсе-йавнӑ, ӗҫри лайӑх опытсемпе пӗр-пӗрне паллаштарнӑ.

Ӗҫе ҫакӑн пек организацилени пур суйлавҫӑсене те суйлав йӗркине вӗренес ӗҫе йавӑҫтарма, суйлав йӗркине вӗренме май панӑ.

Суйлава лайӑх хатӗрленсе ҫитме район центрӗнче, йалсенче, колхозсенче суйлавҫӑсен митингӗсене иртерни питех те пысӑк усӑ пачӗ. Йалсенче 74 митинг туса иртрнӗ. Вӗсенче 20.507 ҫын пулнӑ. Суйлав округӗсен центрӗсенче 4 митинг, кашни округра пӗрер митинг пулнӑ, вӗсенче 2.122 ҫын пулнӑ. Район центрӗнче 6 митинг иртрнӗ, вӗсенче 12.364 ҫын пулнӑ. Кунсӑр пуҫне ийунӗн 24-мӗшӗнче Ижекей вӑрманӗнче районри суйлавҫӑсен митингне, массӑлӑ гуљани иртрнӗ. Унта 23.600 ҫын пулнӑ.

Хӗрарӑмсене, ҫамрӑксене, ватӑ старгксене уйрӑмӑн пухса суйлав умӗнхи пухусене иртрнӗ. Хӗрарӑмсен пухӑвӗсем 64, вӗсенче 2.057 ҫын пулнӑ; ҫамрӑксен пухӑвӗсем 97, вӗсенче 3.724 ҫын; стариксен пухӑвӗсем 41, вӗсенче 763 ҫын пулнӑ. Колхозниксемпе йединоличниксен пӗрлехи пухӑвӗсем 177, вӗсенче 23.472 ҫын пулнӑ.

Суйлав ҫинчен ҫырса 162 ҫтена хаҫачӗ кӑларнӑ.

Агитатӑрсенчен нумайӗшӗ хӑйсене шаннӑ ӗҫе бољшевикла туса пыма тӑрӑшрӗҫ. Сӑмахран, Тарабайра агитатӑрсене вӗрентсе хатӗрлеме чи малтан агитатӑрсен ҫеминарне организацилерӗ. Ҫак ҫеминара Сазановский йулташ йертсе пынӑ. Ҫеминарта 37 агитатӑра вӗрентсе хатӗрленӗ. Вара ҫак агитатӑрсем Конституцисене тата суйлав Положенисене ӑнлантарас тата депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсемшӗн, коммунисемпе партире тӑманнисен сталинла блокӗн кандидачӗсемшӗн А. Малининпа Л. Пољакова йултӑшсемшӗн агитацилес ӗҫсене туса пынӑ. Районти ытти колхозсенче те малтан агитатӑрсене вӗрентсе хатӗрленӗ, унтан вара агитатӑрсем хӑйсем кружоксене йертсе пынӑ.

Николайӗвскинчи агитатӑр Е. Андрейӗв йулташ, комсомолец, кружокра 13 заңати иртнӗ, хор кружокӗ организациленӗ, колхоза 6 хуҫалӑх кӗртнӗ. Вӑл халӗ парти кандидатне кӗчӗ. Штанашра И. Черноносӑв йулташ кружокра 9 заңати иртрнӗ. Ф. Ҫидӑрӑв (ватӑ старик) Мижеркассинче агитацилӗ ӗҫе лайӑх туса пынӑ. Кун пек примерсем татах нумай.

Агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе анлӑн сарса йанипе пӗрлех доверӗннӑйсем те лайӑх ӗҫленӗ. Шуљу йалӗнчи Романав йулташ доверӗннӑй пулса активлӑ ӗҫлерӗ. Суйлавсем ҫинчен килрен киле кӗрсе ҫӳресе ӑнлантарса панӑ. Вӑл халӗ парти ретне кӗнӗ.

Вишенер йалӗнчи доверӗннӑй Антонӑв йулташ хӑйӗн ӗҫӗ ҫинчен районти „Ҫӗнтерӳ ҫулӗ“ хаҫатӑн ийунӗн 26-мӗшӗнче тухнӑ номӗрӗнче ҫапла ҫырать:

„Епӗ суйлавҫӑсене суйлав ҫинчен ӑнлантарса парас майпа йала виҫӗ пайа уйӑртӑм. Пӗр пайне хам ҫине илтӗм, иккӗшне ытти агитатӑрсене патӑм. Епӗр хаљхи суйлав кампанийӗнче хӗллехи вӑхӑтри пек кружоксем туса вӗрентме пултараймарӑмӑр. Мӗншӗн тесен, халӗ ҫынсем ӗҫ патӗнче. Халӑх ӑҫта— епӗр те унта. Тепӗр чух халӑх йерҫӗнӗ вӑхӑтра урама тухса ларать. Епӗр те унта, суйлав саккунӗсемпе Конституцисене вӗрентрӗмӗр. А. Малининпа Л. Пољакова йултӑшсен пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен каласа патӑмӑр“.

Доверӗннӑйсем суйлава хатӗрленес ӗҫе активлӑн туса пыни ҫинчен, Ленин-Сталин партишӗн, сталинла блокӑн кандидачӗсемшӗн агитацилени ҫинчен Н. Терентйӗв (Упукушкинчи „Жнейка“ колхозра) колхозниксен пухӑвӗнче тухса каланинчен курма пулать. Пирӗн учител, пирӗн атте, ҫулпуҫ Сталин йулташ тата унӑн соратникӗсем Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пани ҫинчен пӗлсен, вал „Сталин йулташа Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйлани чӑваш ӗҫҫыннисемшӗн питӗ пысӑк телей, савӑнӑҫ мухтав“ тесе, пурне те коммунисемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑлама чӗннӗ.

Суйлава хатӗрленнӗ май колхозсенче, учреждениесенче производствӑлӑ ҫекленӳ пулни уйрӑмах палӑрчӗ. Чылай колхозсем тырпулсене пухса кӗртме хатӗрленсе ҫитрӗҫ. Ҫӗртме сухине вӑхӑтра туса пычӗҫ. Йединоличниксем 182 кил колхоза кӗчӗҫ.

Ийунӗн 26-мӗшӗнче суйлавҫӑсем суйлав участкисене пысӑк савӑнӑҫпа пырса телейлӗ пурнӑҫшӑн, коммунисен партишӗн, коммунисемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑларӗҫ. Хӑйсен савӑнӑҫне вӗсем суйлав участкине пырсан кунӗпех ташласа, йурласа савӑннипе кӑтартрӗҫ. Суйлавҫӑсем пурте пӗр шухӑшлӑ пулса сасӑланипе Ленин—Сталин партине тата Совет правителствине чӗререн парӑннине пит те уҫҫӑн кӑтартрӗҫ.

Районри парти организацийӗ иртнӗ суйлав вӑхӑтӗнче туйаннӑ паха опытсене ҫирӗплетсе, малашне массӑлӑ агитаци ӗҫне тата ытларах вӑйлатма хӑйӗн умне ҫирӗп задачӑ лартрӗ.

ПСК(б)П Хӗрлӗ Чутай райком ҫекретарӗ Толстов.

Рекомендателсем пухӑва пымаҫҫӗ

Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн Канаш районӗнчи уйрӑмӗ ҫумӗнчи партогранизаци отчотпа суйлав пухӑвӗнче парти ретне ӳстересси пирки нумай калаҫусем пулнӑ. Вӑл калаҫусем ку таранччен те пыраҫҫӗ ха. Анчах кӑҫалхи ҫул пӗр ҫынна ҫеҫ, Фаланин йулташа кандидатран парти членне куҫарнӑ.

Парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе парторг Андрийанӑв тата унӑн заместителӗсем Московкинпа Трофимӑв йултӑшсем нимӗн те тумаҫҫӗ.

Икӗ уйӑх кайала Свйатсков йулташ партине кӗме документсем хатӗрлесе пана. Анчах пухӑва рекомендаци паракансем: Вољникӑв—Вӑрнарти парткабинет пуҫлӑхӗ тата Копейкина—Вӑрнарти ресторан директӑрӗ, сӑлтавсӑрах темиҫе хут чӗнсен те пыман пирки Свйатсков зайавленине ку таранчен те пӑхса тухаймаҫҫӗ. Хӑҫан пӑхса тухасси те паллӑ мар.

Малта пыракан комсомолӗцсене парти ретне илесси ҫинчен кунта шухӑшламаҫҫӗ те пулмала. Ку комсомолӗцсене политикалӑ воспитани парас ӗҫе лайӑхлатманнинчен курӑнать. Парторганизаци пухӑвӗнче планпа пӑхнӑ пулсан та, комсомол организацине пулӑшасси ҫинчен сӳтсе-йавман. Комсомолӗцсене ваљљи организациленӗ политвӗренӳ кружокӗ ӗҫне ҫителӗклӗ тесе калама ҫук.

Сочувствуйушчисен ретне те никама та илмен. Сочувствуйушчире тӑракан Трофимӑвпа Максимӑва пулӑшмаҫҫӗ. Ҫитменнине вӗсем сочувствуйушчинче тӑнине кӑтартакан документсем те ҫук. Трофимӑв Шӑхасан районӗнчен, Максимӑв Тӑвай районӗнчен килне, ку районсем Канашпа йунашарах, анчах меншӗн Трофимӑвпа Максимӑвӑн докумӗнчесем ҫукки ҫинчен парторг интересленмест.

А. Михайлӑв.

Чи лайӑх пограничниксем партине кӗреҫҫӗ

Кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ йенчи чикӗри хӗрлӗ йалавлӑ №-ски отрйадри вуншар бойецсем—Украинӑ ССР Верховнӑй Совет суйлав кампанинчи активиссем—коммунисен партине кӗреҫҫӗ.

Укрзинӑ К(б)П кандидатне илнисен шутӗнче—отрйадри комсомол организацийӗн президиум членӗ, вӗренӳри отличник, пограничник-сверхсрочник Артеменко йулташ. Парти кандидатне сверхсрочнике Архипӑв йулташа та илнӗ, вӑл—чаплӑ бойец, ӑна отрйад командӑвӑнийӗ темиҫе хутчен те поошчрени панӑ. Парти кандидатне илнисем ваљљи пӗтӗмӗшлӗ пӗлӳ илмели тата парти историне вӗренмели кружоксем организацилейӗ.

(ТАСС).

Рационализаци ӗҫне вӑйлатса йамала

Ултӑ ҫул хушши ӗҫлет ӑнтӗ Кочетков йулташ Куславкка комбинатӗнче. Малтанах моторист, унтан слесӑр пулса ӗҫленӗ. Хаљхи вӑхӑтра цехри механик заместителӗнче ӗҫлет.

Ҫак ултӑ ҫул хушшинче вӑл производствӑ ӗҫне лайӑхлатмали рационализацилӗ сӗнӳсем 30 панӑ. Вӑл хисепрен 20 сӗнӳве пурнӑҫа кӗртнӗ. Ҫав 20 сӗнӳве пурнӑҫа кӗртни ҫулталӑкра 75 пин тенкӗ йахӑн перекетлеме май парать, производствӑ ӗҫне лайӑх йӗркелеме пулӑшать.

Стољарнӑй цехри „шипорез“ станок иртнӗ вӑхӑтра йӗркелӗ ӗҫлеймен, час-часах аварисем пулнӑ. Ҫавна пула ку станокпа ӗҫлекенсем плана 40—55 процент ҫеҫ тултарса пынӑ. Станока Кочетков йулташ панӑ сӗнӳпе йусанӑ хыҫҫӑн ӗҫ чылайах малала кайрӗ. Халӗ станок лайӑх ӗҫлет, пӗр минут та простой пулмасть.

Ҫакӑн пекех вентиљатӑр циклонӗ те малтанхи вӑхӑтра лайӑх ӗҫленӗскер кайарахпа йурӑхсӑра тухнӑ. Ӑна йусама нумай техникла пӗлӳ кирлӗ пулман, подшипнике тӗрӗс йӗркелесе лартни ҫеҫ кирлӗ пулнӑ.

Анчах комбинат руководителӗсем ҫавӑн пек ытусем ҫине питех те тӳртӗнле пӑхаҫҫӗ, Кочетков йулташ пек изобретателствӑпа рационализаци ӗҫӗсемпе интересленекенсене пулашмаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӑл ӗҫсем начар кунта.

Пӗтӗм Сойузри профсойузсен Тӗп Совечӗ изобретателсен Совечӗсен ӗҫӗсене вырӑнти профсойузсен аллине парасси ҫинчен йышӑннӑранпа чылай вӑхӑт иртрӗ. Анчах комбинатри профсойуз организацийӗ ку тӗлӗшпе нимех те туман, изобретателствӑ ӗҫне йертсе пырассине хӑйаллине илмен-ха. Инженерлӑ-техникалӑ работниксем те ӗҫре сахал пулӑшаҫҫӗ.

Комбинатри цехсенче хӗсӗк вырӑнсем чылай. Типӗтекен цехра вагонеткӑсене електричествӑ вӑйӗпе ӗҫлеттермеҫҫӗ, рабочисем вӗсене ал вӑйӗпе тӗртеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех йавӑҫ каскалакан тата стољарнӑй цехсенче туса кӑларнӑ продукцисене склада турттарассине механизацилемен, цехсемпе склад хушши 60—70 метр кӑна пулин те автомобилсемпе турттараҫҫӗ.

Профсойуз организацийӗ изобретателствӑпа рационализаци ӗҫне ҫине тӑрсах вӑйлатмала. Ку ӗҫе мӗн таран лайӑх туса пыратӑк, ҫавӑн чухлӗ стахановла йухӑм вӑйланма, анлӑн сарӑлса пыма пултарать.

А. М-в.

Техник-строителсем

Шупашкарти коммуналлӑ—строителствӑ техникумӗнчен ҫак йулашки 6 ҫул хушшинче 189 ҫын вӗренсе тухнӑ. Кӑҫал тата 41 ҫын вӗренсе тухрӗҫ.

Халӗ вӗренсе тухнӑ студентсем ийулӗн 15-мӗшӗнче Мускавпа Ленинград хулисене екскурҫине кайаҫҫӗ. Унтан таварӑнсан Дагестана 15 ҫын, Калмӑксен АССРне—6 ҫын кайаҫҫӗ, хамӑр республикре ӗҫлеме 17 ҫын йулаҫҫӗ тата 3 ҫын аслӑ шкулсене вӗренме кайаҫҫӗ.

Г. ИВАНОВ.

Йулашки почтӑран

Иртӗнсе кайнӑскерсем

Шӑмӑршӑ районӗнчи „Сталин йалавӗпе“ хаҫат суту-илӳ организацисем начар ӗҫленине критиклесе, ийунӗн 23 мӗшӗнче фелйетон пекки пичетлесе кӑларнӑ. Автӑр тата хаҫат редакторӗ суту-илӳ организацисен начар ӗҫӗсене критиклесе ҫырма витӗмлӗ сӑмах шыраса, пирӗн колхозниксен чӑн-чӑн пурнӑҫне пӑсса кӑтартас ҫул ҫине тӑнӑ.

Хаҫат нимӗн намӑса пӗлмесӗр „алӑк умӗнче 10—15 ҫын сурчӑкӗсене ҫӑтса ихӗ салтасса кӗтсе тараҫҫӗ. Хӑш-пӗрисен ҫийес килнипе пыршисем те шавлама пуҫлана“, тесе ҫӳпӗлтетет. Хаҫат ҫапла ҫырнипе Шӑмӑршӑри суту-илӳ организацисене критиклемест, совет гражданӗсенчен тӑрӑхласа кулать. Кам ӗнентӗр, Шӑмӑршӑ ҫыннисен „ҫийес килнипе сурчӑкӗсене ҫӑтнине, пыршисем шавланине“? Совет влаҫӗн усал тӑшманӗсем ҫеҫ пирӗн Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ ҫинчен ҫапла елеклеме пултараҫҫӗ.

Редакцинчи чарусӑр ҫынсем „Шӑмӑршӑра авланманнисене пуҫанма лайӑх мар, авланас пулать, авлансассӑн килте арӑму йашка тавраш пӗҫерсе пама пултарать(!?)“—тесе ҫырма именмеҫҫӗ. Совет хӗрарӑмӗ йашка-тавраш ҫеҫ пӗҫерет-и? Шӑмӑршӑри ҫамраксем совет ҫамракӗсенчен уйрӑм-и мӗн вара? Мӗн ҫӳпӗлтететӗр есӗр, редакци сотрудникӗсем?!

Бољшевикла критикӑна сармала, анчах пирӗн совет хаҫачӗ буржуалӑ, буљварти листок маррине пӗлес пулать.

Типӗтекен цех суртлӑ материалсем памасть

КУСЛАВККА. Комбинат план тултарасси стољарнӑйпа каскалакан цехсенчен килет. Анчах ҫак цехсене материалсем тӑратассине йӗркелемен пирки ӗҫ йапах пырать.

Уйрӑмӑнах материал тӑратас йенӗпе типӗтекен цех айапла. Вӑл час-часах виҫесӗр, суртлӑ мар материалсем парать. „Хӑшпӗр чухне пӗр вагонеткӑрах 3—4 теслӗ тӗрлерен виҫелӗ материалсем пулаҫҫӗ, тепӗр чухне тата чӗр материалсем параҫҫӗ“, тет ҫменӑ маҫтӑрӗ Новикӑв йулташ. Ҫавна пула станоксемпе туллин усӑ курма ҫук, простойсем пулаҫҫӗ.

Комбинат дирекцин цехсене материал тӑратассине йӗркелемеле. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах типӗтекен цех ӗҫне лайӑхлатни кирлӗ.

А. Мошков.

Йалти лавкасем

КАНАШ. Кӑҫалхи ӑнса пулнӑ тырпула пухса кӗртме хатӗрленнӗ май, Сиккассинчи йалпо правленийӗ Сиккасси йалӗнче икӗ лавка усрӗ.

Лавкасенче ҫурласем, ҫавасем, лапаткасем кирлӗ таранах пур. Кусемсӗр пуҫне колхозниксене кулленхи пурнӑҫра кирлӗ таварсем те—ҫитсӑ, хунар, лампӑ, сахӑр т. ыт. те. кӳрсе килнӗ.

И. Иванов.

„Красноармейӗцсем радио тӑрӑх И. В. Сталин Советсен Чрезвычайлӑ VIII-мӗш сйесӗнче ССР Сойузӗн Конституци пройекчӗ ҫинчен тунӑ доклада итлеҫҫӗ“—А. М. Љубимӑв художник картинӗ.
(„Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ тата Тинӗс-Ҫар Флочӗ XX ҫул тулни“ выставкӑра). Сойузфото репродукцийӗ.

Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнчи ӗҫсем

(УЧИТЕЛ СТАТЙИ)

Партипе правителствӑ, Сталин йулташ тата пӗтӗм халӑх тӑрӑшнипе совет шкулӗ ҫулсерен ӳссе, ҫирӗпленсе пырать.

Совет шкулӗнчен чӑн-чӑн совет патриочӗсем, коммунисӑмшӑн кӗрешме хӑватлӑ, ӑслӑлӑх никӗсӗсене ҫирӗп ҫавӑрса илнӗ паттӑрсем тухаҫҫӗ.

1937—38 вӗренӳ ҫулне вӗҫлесен, епӗр, Улатӑр районӗнчи Ҫӗнӗ Ейпеҫ туллимар вӑтам шкулӗнче вӗрентекенсем, хамӑрӑн ҫулталӑкри ӗҫсене пӑхса тухрӑмӑр. Пирӗн шкул иртнӗ ҫулта ытти ҫулсемпе танлаштарсан, пур совет шкулӗсем пекех, пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ.

Ачасем шкула ытти ҫулсенчи пек мар тӗрӗс-тӗкеллӗн ҫӳрерӗҫ. Ку тӗлӗшрен 2 мӗшпе 7-мӗш классем (клас руководителӗсем кунта Климентйӗвпа Охримӑв йултӑшсем) уйрӑмӑнах малта пычӗҫ. 7-мӗш класра вӗренекенсем техникумсене, училищӑсене кӗме лайӑх хатӗрленчӗҫ. Вӗсем коммунисӑмӑн активлӑ строителӗсем пулма хатӗрленеҫҫӗ.

Учителсем те хӑйсен пӗлӗвӗсене хӑпартса пыраҫҫӗ. А. Морелев вӗрентекен 1-мӗш „а“ класра пӗр ача та иккӗмӗш ҫула йулмарӗ. Клементйӗв йертсе пыракан 2-мӗш класра икӗ ӑчасӑр пуҫне ыттисем питӗ хитре ҫыраҫҫӗ, лайӑх вулаҫҫӗ, пур типлӑ задачӑсене те тума пӗлеҫҫӗ, хӑйсем задачӑсем шухӑшласа кӑлараҫҫӗ. Дисциплинӑ та лайӑх. Клементйӗв учител, пӗр-пӗр ача шкула килмесен, урок хыҫҫӑнах ун патне йаданах килне кайса, ача мӗншӗн шкула пыманнине пӗлсе пӗлет.

4-мӗш класра Бељаков учител переменӑсене интереслӗ, хаваслӑ иртерме вӗрентнӗ: пионерсем звенопа йе йурӑ йурласа кӑтартаҫҫӗ, йе физкуљтурӑ вӑййисем выљаҫҫӗ, йе хаҫатсем тӑрӑх ҫӗнӗ хыпарсем ҫинчен калаҫаҫҫӗ тата ыт. те. 7-мӗш класӑн руководителӗ Охримӑв тӑрӑшнипе икӗ ача (Петровпа Тељцов), дисциплинӑна малтан начар пӑханнӑскерсем, пӗтӗмӗшпех тӳрленсе ҫитрӗҫ. Дисциплинӑ йенчен ку клас кӑтартулӑ клас пулса тӑчӗ.

Ҫитӗнӳсем шкулта тата та чылай. Анчах епӗ ку статйара пирӗн шкулӑн ҫитменлӗхӗсем ҫинчен ытларах каласшӑн. Пирӗн учителсем: иртнӗ ҫулхи ҫитменлӗхсене тӗплӗн палӑртса хумала, ҫитес ҫулта вӗсене текех тумала мар, тесе ҫирӗппӗн татса каларӗҫ. Ҫавӑнпа епӗ ку статйара палларах ҫитменлӗхсем ҫинчен асӑнасшӑн. Ун йышшисем республикӑри ытти шкулсенче те пулма пултараҫҫӗ.

Хӑшпӗр учителсем, уйрӑм предметсемпе вӗрентекенсем, хӑйсен предмечӗсене вӗрентме вӗренӳ ҫулӗн пуҫламӗшӗнчех тӗрӗс план туман пулнӑ. Ҫӗнӗ материалсене вӗрентессине пӗтӗм вӗренӳ ҫулне тӑсса йанӑ. Мӗн вӗренсе, иртернине аса илме (повторени) планра виҫ-тӑватӑ сехет ҫеҫ хӑварнӑ. Ачасем вӗреннӗ материала ҫулахи вӑхӑтра та хӑйсем тӗллӗн аса илмех тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫавна пула вӗсем чылай материалсене манса кайнӑ. Ҫакна епӗ темиҫе ҫул хушши сӑнаса пытӑм: аса илмен предметсемпе ачасем екзаменсенче, пӗлӳ тӗрӗслевӗсенче уйрӑмах „ишеҫҫӗ“. Ку ҫитменлӗхе пӗтерес тесен пирӗн мӗн тумала?—Кашни предметник хӑйӗн предмечӗ тӑрӑх ҫӗнӗ материалсене вӗрентес ӗҫе календарлӑ планпа тӗрӗс уйӑрса хурса, ангелӗн 15-мӗшӗнчен малала тӑсмала мар.

Вӗреннине аса илме мӗн пур материалсене вӗрентсе пӗтерсен (пӗлӳ тӗрӗслевӗсем умӗн) кӑна мар, вӗренӳ ҫулӗн пӗрремӗш чӗрӗкӗнчех тытӑнас пулать—хӑш чухне уроксенче, йе уйрӑм уроксем тусах.

Предметсен материалӗсене календарлӑ планпа вӗренӳ ҫулӗн чӗрӗкӗсем тӑрӑх уйӑрасси, мӗн вӗреннине аса илме (повторени ваљљи) мӗн чухлӗ вӑхӑт хӑварасси—питӗ пысӑк ӗҫ. Ҫак ӗҫ пирки ытӑва учителсен кӗркунехи конференцисенче, ҫекцисенче коллективлӑ татса хӑварсан аван пулнӑ пулӗччӗ.

Унтан учителсем план тусан, директӑрпа вӗренӳ пайӗн пуҫлӑхӗ тӗплӗн пӑхса тухмала, мӗншӗн тесен вӗсем кашни учител ӗҫӗшӗн ответ тытаҫҫӗ. Плансене ҫеҫ мар, директӑрпа вӗренӳ пайӗн пуҫлӑхӗ учителӗн ӗҫне кашни кунах тӗрӗслесе пымала: хӑйӗн планне учител ӗҫе кӗртсе пырать-и, ҫук-и, мӗнле ӗҫе кӗртсе пырать? Учител те хӑй ӗҫӗнчи уҫӑмсем ҫинчен директӑрпа вӗренӳ пайӗн пуҫлӑхне ҫийӗнчех пӗлтерсе тӑмала.

Иккӗмӗш ҫитменлӗхсем учител вӗрентӳ ӗҫне йӗркелеме, урок иртерме пӗлменнинчен килеҫҫӗ. Пирӗн шкултах хӑшпӗр учителсем (Кузнецов В., Кузнецов К.) уроксене чылай чухне хатӗрленмесӗр пынӑ. Урока хатӗрленмен учител мӗнле урок патӑр-ха вӑл?! Ҫакна учителсем пӗлеҫҫӗ, анчах ҫапах та хӑшӗ пӗри питӗ хытӑ хӑлхалӑ, кӑтартса панине итлесшӗн мар. Урока хатӗрленнӗ чухне аван шухӑшлас пулать, тӗрлӗ майсем шырас пулать: мӗнле иртермеле урока? Мӗнле материалсемпе усӑ курмала? Ачасем урока мӗнле ӑнланӗҫ? Анчах урока пырсан хӑшпӗр учител опыт тумалине сиктерсе хӑварать, йапалана, ҫав йапала хӑй патӗнче пулсан та, натурӑра кӑтартма ӳркенет. Ак пирӗн шкултах зоологи урокӗсене илер. Ку предметпа тем тӗрлӗ чӗрӗ материал тупма пулать, анчах пулӑ ҫинчен вӗрентнӗ чух алӑ айӗнче тӑракан пулӑпах усӑ курмаҫҫӗ. Кӑткӑпа пыл хурчӗ ҫинчен те ҫавӑн пекех кӑтартмасӑрах, сӑнамасӑрах вӗрентнӗ. Пирӗн ҫӗршывра йестествознани вӗренмели експонатсем нумай, пуҫтарулӑ пулсан шкулти кашни йестествӗнник хӑйне ваљљи тем тӗрлӗ йапала тупма пултарать. Физикӑпа хими урокӗсем те нумай чухне доска ҫинче мелпа ҫыркаланипех иртсе каҫҫӗ.

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн кӑларнӑ пособисем питӗ нумай. Кӑтартулӑ пособисене пур шкулсене те ҫителӗклӗ таран памала, вӗсене ӑҫтан тата мӗнле майпа кӳрсе килмелле кӑтартмала. Приборсемпе реактивсене ӑҫтан илмелине нумай шкулсем пӗлмеҫҫӗ.

Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче нумай предметсемпе учебниксем пулмарӗҫ. Кун пек йапалана малала чӑтма ҫук. Учебниксене вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ кӑларасси—Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн кунӗн-ҫӗрӗн тумалли ӗҫӗ пулса тӑрать.

Тӑван чӗлхепе вырӑс чӗлхине пирӗн шкулти ачасем ҫителӗклӗ пӗлеймеҫҫӗ, ҫырусенче нумай йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ, изложенипе сочиненисем ҫырма пултараймаҫҫӗ. Ҫаксем вӗсем мӗн вӗрентнине кулленӗ ҫирӗплӗтсе пыманнинчен, грамматикӑна сӳтсе-йавассипе ҫыру навыкӗсем сахаллинчен килеҫҫӗ.

Географипе ачасем карттӑсем умӗнче нумай пӑтранаҫҫӗ. Географи вӗрентнӗ чух хӑш учителсем контурлӑ карттӑсемпе усӑ курмаҫҫӗ. Контурлӑ карттӑсемпе ачасене хӑйсене ӗҫлеттерсен вӗсен географи пӗлӗвӗ ҫирӗпленмеле, ачасемшӗн карттӑ ӳкерес ӗҫ питӗ интереслӗ ӗҫ,—ҫакна хӑшпӗр географсем манна.

Ачасене ҫӑмӑл, лайӑх ӑнланмала вӗрентес пулсан, учителӗн предмета тата унӑн методикине лайӑх пӗлес пулать. Ҫавӑнпа кашни учител хӑйӗн пӗлӗвне хӑпартас тесен кулленех вӗренмеле, ҫулахи вӑхӑтра заочнӑ вӗренекенсен—ҫеҫҫисенче, ыттисен—курссенче пулмала.

Ҫитес 1938—39 вӗренӳ ҫулне кӗме пирӗн учителсен лайӑх хатӗрленес пулать. Тӗлӗнмеле, хӑшпӗр ҫамрӑк учителсем (Кузнецов В., Кузнецов К.) пирӗн шкулта методикӑ кӗнеккисем шкапра темӗн чухлех выртнӑ пулсан та, ку таранччен пӗр методикӑ кӗнеки те тытса вуламан.

Ачасем уроксене килтен лайӑх вӗренсе пырсан вӗренӳ ӗҫӗ вӑйлӑн малала кайать. Анчах епӗр ачасене урока килтен лайӑх хатӗрленсе пыма хӑнӑхтарайман-ха. Ку ӗҫе пӗтӗм шкул коллективӗн тытӑнмала. Ача урока вӗренсе килмесен, ман шутпа, ӑна ҫав йулнӑ урока заңати хыҫҫӑн хӑварса хатӗрлеттерес пулать, пӗлменнине ӑнлантарса памала. Ҫак ӗҫе ачасем йуратса тучӑр. Ӑнланчӑр вӗсем: урока килтен вӗренсе килмесен, вӗсене хӑварса та пулин вӗрентеҫҫех. Пирӗн хӑшпӗр ачасем хӑш учебниксене ҫулталӑкра та икӗ ҫеҫ тытаҫҫӗ. Учебникре мӗн ҫырнине пӗлмеҫҫӗ. Мӗнрен килет-ха ҫак йапала? Ман шутпа, учител ыйтманнинчен. Илер сӑмахран арифметикӑ предметне. Арифметикӑпа учител правилӑсене ӑнлантарать те унтан задачӑсам тума парать. Арифметикӑ учебникне ачасем тытса та пӑхмаҫҫӗ, арифметикӑ учебникӗнче мӗн ҫырнине йахӑнне те пӗлмеҫҫӗ.

Ку сӑмах ытти предметсене те тивет. Чӗлхесене вӗрентекен учителсем ачасене кӗнекесемпе ӗҫлеме уйрӑмах лайӑх вӗрентмеле. Хӑш ачасем, аслӑ класрисем,хех, кӗнекен оглавленипе усӑ курма пӗлмеҫҫӗ, статйасене шыраса тӗнкисем тухаҫҫӗ.

Тата пирӗн шкулта нумай ачасем калаҫма пӗлменни питӗ палӑрать. Ачасен чӗлхине, калаҫма пӗлессине пӗрремӗш класранах тытӑнса малала тӑрӑнлатса пымала. Ача учителе хирӗҫ йалан туллин ответ памала. Чӗлхе урокӗсенче уйрӑм калаҫу урокӗсем тумала. Ачана калаҫма пур предметсемпе те вӗрентмеле. Ун пек предметсем пирӗн чылай. Истори урокӗсенче, географи, йестествознани, литература т. ыт. уроксенче ачасем пӗр вӗҫрен, пӗр чарӑнмасӑр калаҫа пама вӗренмеле, епӗр учителсем, ҫак ӗҫе тӗплӗн, чӑтӑмлӑн тумала.

Шкулсем пирӗн аслӑланса, пысӑкланса пыраҫҫӗ. Учителсенчен халӑх ҫулран ҫул ытларах ыйтать. Ҫавӑнпа та пирӗн нумай пӗлмеле, нумай шухӑшламала, чӑтӑмлӑн тӑрӑшмала, вӗренмеле, лайӑх вӗрентмеле. Партипе правителствӑ, Сталин йулташ пире хамӑрӑн умри аслӑ ӗҫе тума тӑванӑн та тимлӗн пулӑшса пыраҫҫӗ.

А. Акимӑв.

Ҫӗнӗ Ейпеҫ шкулӗнчи учител.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Левант фрончĕн хĕвелтухăç йенчи çектăренче калама çук хайар çапăçусем пыраççĕ. Пăлхавçăсемпе интервентсене кунта фашиссен авиацийĕ хыттăн пулăшаҫ. Республикă çарĕсем Нулес йатлă йалтан тухса кайнă. Çав йалтан кăнтăр йенче пит хайар çапăçусем пулса пыраççĕ. Республиканецсем фашиссен ытти йалсем çине тунă атакисене йалтах сирсе пăрахнă.

Ытти фронтсенче — улшăнусем çук.

Фашиссен авиацийĕ республикă йалĕсем çине çаплах бомбăсем пăрахаҫ. Ийулĕн 7-мĕшĕнче фашиссен бомбардировщикĕсем Сагунторан çурçĕр-хĕвеланăç йенче ларакан йалсем çине темиçе хутчен те вĕçсе пынă.

Таррагонă провинцинче итаљйанецсен виçĕ моторлă тăватă бомбардировщикĕ Реус хули çывăхĕнчи йалсем çине бомбăсем пăрахнă. Йалти халăхсем хушшинче вилнисемпе аманнисем пулнă. Çĕрле фашиссен самољочĕсем Барçелонă патне вĕçсе пынă. Республикăн зенитлă батарейĕсем пеме пуçласан, вĕсем кайала, çурçĕр йеннеле тарнă. Кайала тарнă чухне Монкада йатлă йал çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе унта çынсем вилнĕ тата аманнă.

(ТАСС).

Фашиссем тытса илнĕ районсенчен тарса тухнисем

Пăлхавçăсем тытса илнĕ районсенчен тарса тухакан çынсем Испанин Гибралтарти консуљствине кашни кунах пит нумай пыраççĕ. Çав çынсем, пăлхавçăсен территоринчен тарса тухнă чух хăйсен пурнăçне те шеллеменскерсем, Барçелонăна йама ыйтаççĕ, вĕсем унта кайса республикă çарĕсемпе пĕрле пăлхавçăсене хирĕç вăрçасшăн. Пĕр Андалузирен кăна çавăн пек тарса пынисем 9 пин çын шутланаҫ.

Перехине пăлхавçăсен пăрахучĕ Гибралтарта тăнă. Çав пăрахут çинчи пĕр пассажир тинĕсе сикнĕ те Гибралтарти порт патне ишсе тухнă. Çакăн хыççăн вăл Испанин Гибралтарти консуљствине пынă та ăна Барçелонăна ăсатма ыйтнă, вăл республикă çарне кĕресшĕн пулнă.

(ТАСС).

Чехословакири генлейнăвĕçсен провокацисем

Чехословакири гитлĕрăвĕçсен пуçлăхĕ—Генлейн Берлина кайса, унта виçĕ кун хушши пурăннă. Вăл Гитлĕр патне çĕнĕ инструкцисем илме кайнă. Ийулĕн 9-мĕшĕнче вăл Чехословакине таврăннă. Берлина кайса килни генлейнăвĕçсем „националљнăçсен кодексĕн" пройĕкче пирки Чехословаки правителствипе калаçнă вăхăтра пулнă. Çав пройекта Чехословакири фашисăма хирĕç кĕрешекен партисем пурте ырланă. Ийулĕн 21-мĕшĕнче ăна парламентра сӳтсе-йавма палăртнă.

Германи правителстви, Чехословаки çине тапăнса кĕме сăлтав пекки тупас шутпа, Генлейнпа Чехословаки правителстви хушшинчи калаçусене пăсма тăрăшаҫ.

Чехословаки çывăхĕнчи чикĕне халĕ те Германи çарĕсене илсе пырсах тăраççĕ. Генлейнăвĕçсем хăйсен штурмалă отрйачĕсене Германин охранă отрйачĕсем йевĕрлĕ пĕр çар организаци туса хума тăрăшаççĕ. Çитес çывăх вăхăтрах Германипе йунашар пунктсенче çав отрйадсен тактикăла вĕренĕвĕсем пулса иртмеле, вăл отрйадсен составне техникăлă, моторизациленĕ тата санитари чаçĕсем кĕреççĕ.

Чехословакире Германири фашисла литературăна сутма чарнă. Анчах чикĕ хĕрринчи пунктсенчи магазинсенче Германири фашисла литературăна, Гитлĕр портречĕсене тата фашиссен значокĕсене сутнине тупса палăртнă.

Çак фактсем вĕсем Чехословакин Судет-Нимĕç облаçĕнчи фашисăма хирĕç тăракан халăхсене тарăхтараççĕ. Рабочисем генлейнăвĕçсен штурмălă отрйачĕсене салатса йама ыйтаççĕ, çав отрйадсене Чехословакин йут çĕршыв ĕçĕсен министерстви витĕр пынипе тунă. Рабочисем фашиссен террорне чарма ыйтаççĕ.

(ТАСС).

Германири рабочисем Гитлĕр режимне хирĕç кĕрешеççĕ

Фашисла Германире рабочисем час-часах капиталиссене хирĕç тата фашисла режима хирĕç тăраççĕ. Економикăла пурнăçне лайăхлататассишĕн, ĕçукçине ӳстерессишĕн, ĕç кунне вăрăмлатнине хирĕç пыракан кĕрешĕве рабочисен массисем нумайран та нумайрах хутшăнса пыраççĕ. Тарăхса çитне рабочисемпе работницăсем хăйсем хуçасен чарусăр чăрсăрлăхне хирĕç тăнине терлĕ мелсемпе кăтартса параççĕ. Вĕсем продукци кăлармасăр чарса тăраççĕ, станоксене пăсаççĕ т. ыт. те.

Германи Силезинчи шахтăсенче машинăсене, инструментсене пăсвисем час та час пулаççĕ. Çак кунсенче администраци рабочисене пухнă та арĕслессипе, тĕрмене хупса хурассипе хăратнă. Унтах Гестапо (Германири вăртăн полици) агентне те чĕннĕ.

Берлинри пĕр металл савăтĕнче администраци ĕçукçине 25 процент чакарма шут тытнă. Рабочисем стачкă пуçланă. Тепĕр сехетрен савăта полици тата Гестапо агенчĕсем пырса çитнĕ. Савăт кунĕпех ĕçлемесĕр тăнă: Администрацин ирĕксĕрех ĕçукçине халиччен хи пекех хăвармала пулнă.

Фашисла режима хирĕç пыракан протест йухăмĕ çар промышленнăç предприйатийĕсенче те ӳссе сарăлса пыраҫ. Кунта та стачкăсем, продукцисене пăснисем тĕл пулаççĕ. Рабочисем уйрăмах Испанири пăлхавçăсем патне тата Йапонине кайакан йапаласене нумай пăсаççĕ.

Виçĕ уйăх кайарах Вăтаçĕр Германири авиаци савăчĕсенчен пĕри çар самољочĕсем ваљљи 4 вакун мотор тата ытти чаçсем туса панă пулнă, вĕсене Йапонийе йанă. Çав заказ пĕтĕмĕшпе пекех кайалла таврăннă. Ун çине çапла çырса хунă пулнă: „ĕçре усă курма йурамаççĕ". Çакнашкал фактсемех ытти предприйатисенче те пулнă.

Авиаци министерстви ун пек ĕççемшĕн айăплисене çар сутне парса вĕлермеле тăваççĕ, тесе асăрхаттарнă.

Чехословаки чикки çывăхĕнчи халљ автомобилпе çӳреме çĕнĕ çар çулĕ тăваççĕ. Ăна тунă çĕрте пĕр ерне кайарах ернере 60-шар сехет ĕçлемеле тунă пулнă. Рабочисем: çавăн чухлĕ епĕр ĕçлеместпĕр, Чехословакине хирĕç вăрçă пуçлама пире пĕрре те кирлĕ мар тесе, уççăнах каланă. Администрацин ирĕксерех ернере 60 шар сехет ĕçлеттерессине пăрахмала пулнă.

(ТАСС).

Германири фашисла журналта статйа пичетленсе тухнă, Унта çапла каланă: „йăвăр снарйадсем çурални... çынсене вĕлерет çеç те мар, тата çавна пула нумайĕшĕсем ухмаха тухаççĕ. Сывлăшран бомбăсемпе çĕмĕрни пире неврастенниксене палăртма тата вĕсене общечĕствă пурнăçĕнчен кăларса пăрахма пулăшĕ".

Фашисла медицинă

Теодорович ӳкерчĕкĕ „Пресеклише".

★

Йут çĕршывсенчи хроникă

◆■ Чилире (Кăнтăр Америкă), Ранкогв йатлă хула çывăхĕнче, Америкă компанийĕсен шахтисенче 10 пин горњак забастовкă тунă. Забастовкăна вĕсем чылай рабочисене ĕçрен кăларса йанă пирки пуçласа йанă. Кунсăр пуçне забастовкă тăвакансем ĕçукçи ӳстерме ыйтнă.

■■ Италин Арагони фронтĕнче наступлени тунă çĕре хутшăннă дивизийĕсем, республиканецсемпе вăрçнă чухне 10 пин çын çухатнă, вĕсенчен 400-шĕ офицерсем.

◆◆ Нумайах пулмаҫ Испанири пăлхавçăсем тытса илнĕ Кордовă йатлă хулара пăлхаву пулнăччĕ. Халĕ çав пăлхаву пирки пăлхавçăсен вырăнти гарнизонĕнчи офицерсене нумайĕшне арĕсленĕ. Арĕслениссенчен—32 офицера персе вĕлернĕ, вĕсене Франкона хирĕçле загăвăрта пулнă, тесе айăпланă.

◆■ Ийулĕн 8-мĕшĕнче Валенçире пĕтĕм тĕнчери санитари пĕрлешĕвĕсен представителĕсем Испанин халăх çарне ваљљи Мяахă генерала ултă тутăр тата 25 санитари автомобилĕ панă. Пĕрлешĕвĕн татах 115 санитари автомобилĕсем илмелĕх укçа пур,—тесе пĕлтернĕ вĕсем.

(ТАСС)

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ Мускав хулине реконструкцилемели генераљнăй план çинчен постановлени йышăнни виçĕ çул çитнĕ тĕле

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ Мускав хулине реконструкцилемели генераљчăй план çинчен историлĕ постановлени йышăннăранпа виçĕ çул иртрĕ. Çак хушăра, халăх тăшманĕсем сăтăрлă ĕç тунă пулин те, Мускав хулине реконструкцилемели сталинла плана пурнăçа кĕртес ĕçре столицă пысăк çитĕнӳсем тунă.

Мускав сăн-пичĕ йалтах улшăнчĕ. Урамсемпе плошчĕтсем, кĕперсемпе набережнăйсем палламала мар çĕнелчĕç. Тăхăр набережнăйсем тăрăх çĕнĕ магистраљсем хураççĕ.

Тĕп магистраљсене тӳрлетсе асăлатаççĕ. Горький урамĕн сарлакăшĕ 60 метра çити пулаҫ. Чылай урамсене сарлакалатнă та ĕнтĕ.

2,5 мĕлйун тăваткăл метр урам хушшине асфаљт сарнă.

Илемлĕ те чаплă кĕперсене çĕнĕрен саккăр туса пĕтерне, пĕр кĕперне халљ туса пĕтереççĕ, иккĕшне реконструкциленĕ. Мускав шывĕ урлă метрополитен кĕперĕ тунă.

Столицăри транспăрта çĕнĕрен реконструкциленĕ. Транспăрт калама çук пысăк кăтартусем параҫ. Иртнĕ çулта трамвайсем 1.781 мĕлйун пассажир илсе çӳренĕ (1931 çулта—257 мĕлйун), 1938 çул вĕçĕнче Мускавра 2.385 трамвай вакунĕ, 569 троллейбус, 1.422 автобус, пассажирсем илсе çӳремели таксисем 4.000 тата груз илсе çӳремели таксисем 1.500 пулаççĕ.

Çĕнĕрен вунвиçĕ троллейбус линийĕсем тăваççĕ. Вĕсен тăршшĕ çак çулта 202 километр пулмала.

Мускав урамĕсемпе плошчĕтĕсенче пурăнмали пысăк çуртсем çĕнĕрен чылай тунă. 1938 çул вĕçне генераљнăй план тăрăх çавăн пек çуртсем татах 12 мĕлйун тăваткал метр тумала.

Мускав хулин куљтурăпа йала строителствине те йулашки виçĕ çул хушшинче пит нумай укçа-тенкĕ хывнă. Çĕнĕрен 278 шкул тунă, пуљницăсем тата пуљницă корпусĕсем вунпĕр, ача çуратмали çуртсем 12, кинотеатр 3, универмаг, холодиљник, çăкăр пĕçерекен савăт тата ыт. те...

Мускав хулине шыв тăратмала тăвас тĕлĕшпе те халиччен курман пысăк ĕçсем тунă. Çак çулăн вĕçĕнче Мускав водопровочĕ талăкра 116,5 мĕлйун витре шыв паракан пулаҫ.

Мускаври теплофикаци станцисен пултарулăхĕ 184 пин киловата çити ӳсмеле.

(ТАСС).

Кантăр тата йĕтĕн акса тăвакансен канашлăвĕ

Ийулĕн 9-мĕшĕнче Сойуз Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче йĕтĕн тата кантăр акса тăвакансен канашлăвĕ уçăлнă.

Канашлăва республĕкăсенчи, крайсенчи, облăçсенчи тата районсенчи çĕрĕç органĕсен работникĕсем йĕтĕн тата кантăр акса тăвас ĕçри стахановĕçсем, ăслăлăхпа тĕпчев институчĕсен тата селекцилĕ станцăсен представителĕсем пуханнă.

Нумайĕш облăçсенче лайăх тухăçлă йĕтĕн тата кантăр пухса илесси шанаççĕ.

Тухса калаçнисенчен çакă курăнаҫ: пысăк тухăçлă йĕтĕнпе кантăршăн кĕрешес ĕçе тата вĕсене кăтартулăн пухса илме хатĕрленес ĕçе начар сарса йанă.

Канашлура стахановĕçсем Кљосăв, Гришинă, Погорелайа йулташсем т. ыт. те тухса калаçнă. Канашлăва пуханнисем вĕсене ăшшăн саламланă. Кљосăв йулташ (Курск облаçĕнчи „Хĕрлĕ окоп" колхозран) хăй мĕнле майпа пĕлтĕр гектартан 29 шар центнĕр кантăр сӳсĕ туса илни çинчен, кăçалхи çул гектар пуçне 37-шер центнĕр сӳс тухмала кантăр пăхса ӳстерни çинчен каласа панă.

Канашлу малала та ĕçлет.

(ТАСС).

Тĕне хирĕçле художествăлă выставкă районсене тухса кайрĕ

Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн Чăваш совечĕ тĕне хирĕçле художествăлă куçса çӳрекен выставкă организацилерĕ. Курма пыракансем кăтартса панă тăрăх, халљ выставкăна „Етем пулни çинчен тĕн тата ăслăлăх мĕн калаççĕ" йатлă уйрăм хушнă.

Куçса çӳрекен выставкă ийулĕн 8-мĕшĕнче республĕкăри районсем тăрăх тухса кайрĕ. Чи малтанах выставкă Куславкка комбинатĕнчи рабочисем патĕнче тата колхозсенче пулаҫ. Куславкка районĕнчен выставкă Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле районĕсене кайаҫ. Канаш районĕнче 2 кун ĕçлет.

Выставкăна пĕрле Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн Чăваш совет инструктăрĕ Воробйов йулташ тухса кайрĕ. Вăл выставкă курма пыракансене ăнлантарса параҫ, халăх хушшинче тĕне хирĕçле докладсемпе калаçусем иртерет.

Ф. Тимофейĕв.

ХУЛА ТĂРĂХ

Штрафпа хăратакансем

Акă, есĕр Шупашкар хулинчи пахчана уçăлса çӳреме кĕреттĕр Алăкран кĕрсен тӳрех хăма çинче:

„Пирус тĕпĕсене, маййăр хупписене çĕре ан пăрахăр, пăрахакансене 5 тенкĕ штраф. Курăка ан таптăр, таптакансене 10 тенкĕ штраф", тесе çырнине вулаттăр.

Пахчара канса ларнă, йе уçăлса çӳрене вăхăтра тапак туртнă хыççăн пирус тĕпне ăçта пăрахмала? Хула совечĕн хайар приказĕ тăрăх, çĕре пăрахма йурамаҫ. Анчах икĕ пахчинче те, кăнтăрла хăй çутса шырасан та, пирус тĕпĕсене, ытти çӳп-çапсене пăрахмали урнăсем тупаймăн.

Пирĕн шутпа, малтан çавнашкал çӳп çапсене пăрахмалисене тумала, вара кашни граждании хула совечĕн хайар приказне кĕтмесĕрех пирус тĕпĕсене урнăна пăрахĕ.

Канмали кун хула халăхĕ Атăл йенне кайаҫ. Ытти кунсенче заљати пĕтнĕ хыççăн ăçта канмала? Буљварта канмала, тесе калĕç. Унта пĕр буфет пур. Буфетра ĕçкĕ-çикĕ, ӳсĕр çынсем шавлани. 1932 çулсенчех буљварта библиотекă пурччĕ. Халĕ ун çинчен манса кайнă. Пĕр кĕтессе кĕрсе ларса хаçат-журналсем вуламали йе шашкă-шахмăтла, биллиардла, доминола выљамали вырăн çук. Пахчасенче те çавăн пекех.

Хула совечĕ хула халăхĕн канăвне куљтурлă иртерес тесе çителĕклĕ тăрăшмасҫ-ха. Ытти хуласенче кун пек марçке, теççĕ хула çыннисем. Тĕрĕс калаççĕ вĕсем. Хула совечĕн çакна илтмеле.

Шыва кĕмели йе кĕпе-йĕм çумали вырăн?

Хулари ачасем çулахи вăхăтра Атăл хĕрринчен татăлмаççĕ. Вĕсем кашни кун Атăл хĕрĕнче,— шыва кĕреççĕ.

Иртнĕ çулсенче ачасене шыва кĕмели уйрăм вырăн (купаљнăй) пулман. Кăçал хула совечĕ çамрăк арушăн тăрăшнине кăтартма шут тытнă. Пристăньрен кăшт çӳлерех ачасем ваљљи шыва кĕмели туса панă. Лайăх йапала, анчах ку лайăх йапала ачасемшĕн сиенлĕ пулма та пултараҫ. Мĕншĕн тесен, шыва кĕмели вырăнпа йунашар çӳлерех кĕпе çумали вырăн. Кунта нимĕн таталмасăр 25—30 çын кĕпе-йĕм çăваççĕ, пĕтĕм тасамарлăх ачасем шыва кĕрекен вырăна йухса кайаҫ.

Тӳрех калас пулаҫ, çак тасамарлăх ачасене йĕрĕнтерет. Кун çинчен ачасем хăйсем хула советне пĕлтернĕ, анчах хула совечĕ ачасен ыйтуне сĕтел сулăхне хунă та, маннă пулас.

Ачасене шыва кĕмели вырăн тиса пулмала, ăна хула совечĕн туса парас пулаҫ.

Р. Ш.

Çулйĕр бригадирĕ

Катиккассинчи „Колос". колхоз членĕ Федăр Шадрин йулташ колхозри стахановĕçсенчен пĕри. Сухалана çĕрте-и, йе авăн çапнă çĕрте-и—вăл йаланах малта пыраҫ.

Федăран ĕçри пултарулăхне курă, колхоз членĕсем ăна иртнĕ çулта çулйĕр бригадирĕ пулса ĕçлеме уйăрнă. Бригадир ĕçĕ—ответлă ĕç. Ăна Федăр лайăх пĕлет. Вăл чи малтанах çулйĕр строителствинче ĕçлекен колхозниксем хушшинче дисциплинăна йĕркеленĕ, ответлă ĕçĕн задачисем çинчен каласа ăнлантарнă. Час-часах канашлусем туса ирттернĕ. Çакăнтан пуçланнă унăн ĕçĕ.

Халĕ бригадăра 15 çын, бригадăна 4 лаша çирĕплетсе панă. Кăçал бригадăн 4 километр тăршшĕ çул çине 450 кубла метр хăйăр, 100 кубла метр чул турттармала тата 300 тăваткăл метр çине чул сармала. Пайанхи куна бригадă чул тата хăйăр турттарас плана тултарнă. Халĕ чул сарнă çĕрте ĕçлеççĕ. Ку ĕçе вĕсем çак кунсенчех пурнăçлаççĕ.

Бригадăра кашни çынна уйрăм ĕç уйăрса панă. Кашни хăйĕн ĕçĕшĕн ответлă. Пурте ăмăртаççĕ. Ăмăртура уйрăмănах М. Охотин, С. Иванщикăв, Йе. Надикăвă, П. Баранăвă тата Пољаковă йулташсем малта пыраççĕ.

Ку бригадăн çул участкийĕ ытти участкăсенчен уйăрăлса тăраҫ. Таса, тикĕс, пĕр путăк вырăн та çук.

—Лейăх çул,—теççĕ иртсе çӳрекенсем.

ХАР. ЛИСИН.

Пулни-иртнисем

Пĕчĕк ачана киле хăварнипе пушар тухнă. Ийулĕн 7-мĕшĕнче Ахманери (Тутаркас р.) Игнатиевă Марфă колхозницă хăй ирĕке кайнă, 6 çулхи Геннадийе киле хăварнă. Геннадий спичкăпа выљаса ларнипе вут хыпса илнĕ те пӳртпе кĕлет çунса кайнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

ХУСАНТИ ЙАЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУЧĔ

1938-мĕш çулта I-мĕш курса студентсене илесси çинчен

ПĔЛТЕРЕТ

Институт пысăк квалификацилĕ уйĕç агрономĕсене хатĕрлет.

Институтра 5 çул вĕренмеле.

Института вăтам шкулсене пĕтернисене 17 çултан пуçласа 35 çула çитнисем таран илеççĕ.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен йалхуçалăх аслă шкулĕсем ваљљи йышăннă предметсемпе пулаççĕ.

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕччен илеççĕ. Института вĕренме илнисене общежити тата çтипенди параççĕ

Адрĕс: Казань, ул. Карла Маркса, д. № 65, тел. 30—34.

ДИРЕКЦИЯ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ

Улатăрти выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе вĕрентекен
Вăрнарти зооветеринари,
Çĕрпӳри тата Йетĕрнери йалхуçалăх

ТЕХНИКУМĔСЕНЕ

1938—39 вĕренӳ çулĕнче I-мĕш курса вĕренме илесси çинчен

ПĔЛТЕРЕТ

Техникумсен I-мĕш курсне туллимар вăтам шкул тата вăтам шкулăн 7-мĕш класне пĕтернисене, 15 çултисенчен пуçласа 30 çулхисем таран илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен (хăйсем йе почтăпа) техникум директăрĕ йачĕпе зайавленипе пĕрле çак докумĕнтсене йамала:

а. Хăш çулта çурални çинчен свидетĕлствă;
б. Вĕрнни çинчен свидетĕлствă;
в. Икĕ фото-картăчкă—кашни çинех вĕренме кĕрекенĕн алă пусмала;
г. Сывлăх çинчен врачран илнĕ справкă.

Докумĕнтсене йалтах подлинниксене йамала. Зайавленисене августăн 15-мĕшĕччен илеççĕ.

I-мĕш курса вĕренме кĕрес текенсем, отличниксемсĕр пуçне пурте августăн 15-мĕшĕнчен 28-мĕшне çитиччен туллимар вăтам шкул программи тăрăх çак предметсемпе испытани тытаççĕ: вырăс чĕлхипе, тăван чĕлхепе, арифметикă (çырупа тата сăмахпа), алгебрă (çырупа тата сăмахпа), географи тата ССРС Конституцийĕ (сăмахпа)

Отличниксене испытанисĕрех илеççĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ.

ЧĂВАШСЕН ЙАЛХУÇАЛĂХ РАБФАКĔ

1938—1939 вĕренӳ çулĕнче

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Рабфака 18 çултисенчен пуçласа 30 çултисем таран—арçынсене те хĕрарăмсене те илеççĕ.

I-мĕш курса туллимар вăтам шкул программи чухлĕ пĕлӳ илнисене, II мĕш курса—8-мĕш клас программи чухлĕ, III-мĕш курса—9-мĕш клас программи чухлĕ пĕлӳ илнисене йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕрекенсем çак предметсемпе испытани тытаççĕ:

I-мĕш курса кĕрекенсем—вырăс чĕлхи (çырупа тата сăмахпа), чăваш чĕлхи (çырупа тата сăмахпа) математикă (çырупа тата сăмахпа), ССРС Конституцийĕ, йестествознани тата географи — туллимар вăтам шкул программи тăрăх.

II-мĕш тата III-мĕш курссене кĕрекенсем çӳлте кăтартнă предметсемсĕр пуçне тата çак предметсемпе испытани тытаççĕ: физикă, хими, вырăс литератури тата ССРС историйĕ (II-мĕш курса кĕрекенсем 8-мĕш клас программи тăрăх, III-мĕшне кĕрекенсем—9-мĕш клас программи тăрăх).

Зайавленисемпе пĕрле çак документсене йамала:
1. Вĕренни çинчен свидетĕлствă (подлинник);
2. Сывлăх çинчен тата хул кастарни çинчен справкă;
3. Хăш çулта çурални çинчен свидетĕлствă;
4. Автобиографи;
5. Икĕ фото-картăчкă—вĕренекен хăй алă пусса тата государстві учрежденийĕ çирĕплетсе йамала;
6. Çар учотĕнче тăни çинчен справкă (военнообязаннăйсемшĕн).
Паспăрт хăйне пĕрле илсе пымала.

Зайавленисене августăн 18-мĕшчен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 22-мĕшĕнчен 26-мĕшчен пулаççĕ. Испытание рабфак чĕнсен çеç пымала (ун ваљљи 20 пус маркă йамала).

Занятисем сентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Вĕренме илнисене стипенди, общежити тата выртса тăмалăхсем параççĕ.

Адрĕс: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 22, Сельхозрабфак, директору.

ДИРЕКЦИ.

Изĕвĕç хатĕрлеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Турханти „Хреснчен" колхоз изĕвĕç хатĕрлес ĕçе организацилерĕ. Колхозниксем кусĕрле хуратсах ĕçлеççĕ. Пайанхи куна 1000 пăт изĕвĕç хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

Й. Самарин. Й. Çыгăнов.

Уполномоченный Чувашглавлита № 351

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 881.